Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултариччен – 9 кун

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

16(886) №, 2015, апрель/ака, 30

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


- Чăвашлăх: чул çиеле тухмĕ, хăмла путмĕ. 3 стр.
- "Библиокаçра" Нарспи тĕрлĕ чĕлхепе янăрарĕ. 4 стр.
- Çамрăксем ăмăртса... юрларĕç. 5 стр.
- Çăкăр çĕпри ӳсен-тăраншăн – паха им-çам. 8 стр.
- "Ĕçсе-çапкаланса çӳреместĕп, пурпĕр авланаймастăп..." 9 стр.
- Арçын пилĕк ачине пĕчченех ӳстерет. 11 стр.


САЛТĂР ÇӲПÇИ

## Лайăххине курма пĕлмелле



Алена АЛЕКСЕЕВА, юрăç

Кулленхи пурнăçра лайăххине кăна асăрхатăп: йĕри-тавралăх – çутă, чунра – лăпкă, çынсем – ырă. Тепĕр темиçе уйăхран иккĕмĕш хут анне пулас шухăшпа çунатланнипе те çыхăннă çакă. Япăххи валли пуçра та, чĕрере те вырăн çук.

Юратнă ĕç пурри савăнтарать: ачасене юрлама вĕрентетĕп. Пурте солист пулаймĕ, паллах, çапах хушма пĕлӳ илни никама та сиен кӳмĕ. Нумаях пулмасть манăн вĕренекен Наташа Романова «Мехел» конкурсра иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Вăл Шупашкарти 59-мĕш вăтам шкулта пĕлӳ илет. Ача-пăча «Гармония» пĕрлешӳ солисчĕсем ытти конкурсра та мала тухаççĕ.

Эстрада юрăçисемпе хутшăнма, сцена çине тухса пултарулăхăмпа паллаштарма килĕшет. Юрлама тухсан куракансем пăшăлтатма пуçлаççĕ. «Мăн хырăмлăскер мĕншĕн килте лармасть-ши?» – теççĕ пуль. Хама лайăх туятăп та – концерта хутшăнма хирĕç мар. Çакă – чун киленĕçĕ, манăн пурнăç.

Юрату туйăмĕллĕ çуркуннехи вăхăт манăн кăмăлпа çывăх. Курăк симĕсленнине, çулçă тухнине, тавралăх чечекленнине сăнас килет.

Ывăлăм та çак тĕнчене йăмăкĕ килессе кĕтет. «Аннене юрататăн пулсан икĕ хутчен тапса кăтарт», – варти пепкепе калаçать вăл. Ача çуратасси – хĕрарăм тивĕçĕ.

Общество транспортĕнче ача кĕтекен хĕрарăмсене вырăн паманни çинчен ӳпкелесе калаçаççĕ. Эпĕ уншăн та пăшăрханмастăп: вырăн пур тăк – ларатăп, çук тăк – тăрса пыма та пултаратăп. Кирек ăçта та чĕрне вĕçĕ чухлĕ те пулин лайăххине курма пĕлсен чунра канлĕ.

# Юлашки çыру



Елена АТАМАНОВА сăнӳкерчĕкĕ.

2 стр.

*«Çак çырăва хамăн пĕртен пĕр юратнă тусăм Маня патне 1941 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнче çыратăп. Ну, Маня! Эпĕ çырăвăн малтанхи йĕркинчех манран вут пек хĕрӳллĕ, командирла салам йышăнма ыйтатăп. Тусăм, сирĕн пата текех çырассăн туйăнманччĕ. Çапах та çав телейлĕ кун çитрĕ иккен. Ку çырăва Беларуçри Азаровичирен çыратăп. Паян, утă уйăхĕн 23-мĕшĕнче, нимĕçсенункинчен тухрăмăр, аранах хамăрăннисем патне çитрĕмĕр. Çак хушăра икĕ вăйлă çапăçура пултăм, çапах чĕрĕ юлтăм. Тен, телей пулсан, малашне те сывă пулăп. Пĕр уйăхра темле нуша та курма тиврĕ. Йăлтах каласа кăтартма çук.*

*Беларуç ушахне çуран утса тухрăмăр. Виçшер талăк пачах нимĕн çимесĕр пурăнтăмăр. Сакăр кунра пĕрре çăкăр астиврĕмĕр. Курăкпа, чĕрĕ какайпа çеç хамăра лăплантартăмăр. Çак хыпара илсессĕн мĕнпур юлташна салам кала. Тен, ку манран юлашки çыру пулĕ. Енчен те чĕрĕ юлсан татах та çырăп-ха. Эсир çыру ан ярăр. Эпир часах тепĕр çапăçăва каятпăр. Вĕçлетĕп. Сывă пул! Салампа /алă пуснă/. 23.7.41ç.»*

Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкасси ялĕнче çуралнă, кайран Туçа ялĕнче ӳссе çитĕннĕ Павел Анисимович Ермолаев хăйĕн савнийĕ патне вăрçă хирĕнчен пĕртен пĕр çыру çырма ĕлкĕрнĕ. Унран урăх пĕр хыпар та килмен. Тăванĕсем паянхи кун та вăл ăçта, хăçан вилнине нимĕн те пĕлмеççĕ. Вăрçă хыççăн ун çинчен мĕн те пулин пĕлес тесе çырупа темиçе хутчен те çар комиссариатне тухнă, пĕрре кăна мар шыраттарнă, анчах та нимĕнле хурав та кĕтсе илеймен.

КУН-ÇУЛ

# Вунă ача амăшĕ



Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă чылай ветеран пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Салтак арăмĕсем те нумайăн юлмарĕç.

Ульяна Яковлевна Никифорова Вăрнар районĕнчи Çĕньял Явăш ялĕнче çуралса ÿснĕ. Вăл вунă çулта чухне вăрçă пуçланнă. Ашшĕ Яков Алексеевич Тăван çĕршыва хÿтĕлеме тухса кайнă. Вăл вăрçă хирĕнчен таврăнайман. Амăшне Сăр хĕрне окоп чавма илсе кайнă. Вунă çулти Ульянăн килне хăйĕнчен кĕçĕнрех икĕ йăмăкĕпе юлма лекнĕ.

– Йăмăксене хам çума пăчăртаса фуфайкăпа чĕркесе ларатăп. Пÿртре сивĕ. Хутма вутă çук. Мучи килчĕ те: «Шăнса вилетĕр капла, атя, пĕр-икĕ кун хутмалăх вутă хам парса яратăп», – терĕ. Çапла пÿрте ăшăтрăм, йăмăксене яшка пĕçерсе çитертĕм, – аса илет хĕрарăм çав вăхăтсене.

Йывăр пулсан та халăх чăтнă. Тыррине те çурлапа вырнă, пур ĕçе те лашасемпе, алăпа пурнăçланă. Ачасен те мăн çынсемпе танах ĕçлеме тивнĕ.

Пĕррехинче Ульяна хĕр тантăшĕпе тăватă çухрăмри Сăкăта шкула кайма тухнă. Çул айккинче 4 кашкăра асăрханă. «Кăшкăрма та хăратпăр. Чупатпăр, вĕсем те пирĕнтен юлмаççĕ. Телее, тивмерĕç, тутă пулнă ĕнтĕ», – аса илет ача чухнехине.

1955 çулта кÿршĕ ялти Николай Никифоров çураçма килнĕ ăна. Калаçсах курман пулин те килĕшнĕ хĕр. «Вăрçăран чĕррĕн тухасса, ача-пăчаллă пуласса ĕмĕтленмен», – тенĕ мăшăрĕ. Аслă хĕрĕ çуралсан пушă вăхăтра аллинчен те яман тĕпренчĕкне ашшĕ. Вĕсен ултă хĕр, тăватă ывăл çуралнă. Пурте тĕрĕс-тĕкел ÿссе çитĕннĕ. Паян вĕсен хушшинче учительсем, строительсем, завод-фабрикăра ĕçлекенсем те пур. «Ача амăшĕ героиня» ордена та тивĕçнĕ Ульяна Яковлевна. «Алли ылтăнччĕ мăшăрăн, ĕмĕр платникре тăрăшрĕ. Ывăлăмсемпе мăнукăмсем те çак ĕçе килĕштереççĕ. Эпĕ хам ĕмĕре фермăра ирттертĕм. Пенсие тухсан та чылай хушă уй-хир бригадинче ĕçлерĕм», – хăй пурнăçĕ пирки калаçăва тăсать Ульяна аппа. Килте кĕçĕн ывăлĕпе Мишăпа пурăнать вăл халĕ. Ульяна Яковлевнăн 13 мăнук тата мăнукĕсен 5 ачи. «Ачасем мана тунсăхлама памаççĕ, яланах пулăшма килсе çÿреççĕ», – тет кăмăллăн ĕç тата тыл ветеранĕ.

Аппана ялта ăшă та ырă чунлă пулнишĕн хисеплеççĕ. Пурнăçра нушине сахал мар курнă пулин те хуçăлман вăл.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**
Муркаш районĕ.

# Юлашки çыру

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./

Хайхи Маня, Мария Алексеевна Пудовкина, халĕ Шупашкарта пурăнать. Вăл кĕркунне 94 çул тултарать. Савнийĕн çырăвне вăрахчен упранă вăл, кайран, çулсем иртнĕ май, хăйĕн чи çывăх тантăшне, вăрçăран таврăнайман Павлушăн йăмăкне Тамарăна, панă. Виçĕ çул каялла Тамара Анисимовна пурнăçран уйрăлса кайнă, хаклă çырăва халĕ унăн хĕрĕ, Муркаш районĕнчи Юнкă ялĕнче пурăнакан Лариса Толстова, упрать.

33 çул шкулта учительте ĕçленĕ, халĕ ялти клубра тăрăшакан Лариса Павловна 74 çул каялла шăрçаланă йĕркесене таса хут çине куçарса çырнă. Çак кунсенче кивĕ, сарăхнă çырăва илсе ятарласа Мария Алексеевна патне хăнана килчĕ. «Палланă почерк. Ман Павлуша çырнă. Епле манса кайăн-ха, хам куç хупмасăр та асран тухас çук», – терĕ те Мария Алексеевна, питçăмарти тăрăх юхса аннă çут куççуль тумламĕсене вăрттăн шăлчĕ. Çутă та типтерлĕ хваттерти ăшă калаçу мĕн хĕвел аничченех тăсăлчĕ.

### Утă çулнă вăхăтра

– Вăрçă тухнă кун, 1941 çулхи çĕртмен 22-мĕшĕнче, эпир кунĕпех улăхра утă çултăмăр. Ешĕл курăкĕ хамăр çÿллĕшехчĕ. Çамрăк пулнă, ывăнма та пĕлмен. Киле хĕвел ансан кăна таврăнтăмăр. Каçхине хитре тумланса вăййа тухрăмăр. Паллах, пурте савăнăçлă, сăнпит кулăпа çиçет... Мĕншĕн хурланмалла пирĕн? Анчах та çамрăксем темшĕн ытти чухнехи пекех хавас мар. «Вăйă шухăш пулмалла мар паян, вăрçă тухнă», – терĕç пире урампа пыракансем. Пуçран темĕнпе çапнă пек пулса кайрĕ. Çиçĕмкассинчи /Йĕпреç районĕ/ парка çитрĕмĕр. Пурин те кăмăлĕ пусăрăнчăк, юрлас-ташлас шухăш та пĕтрĕ. Чăх чĕпписем пек пĕр çĕре пухăнтăмăр та вăрахчен калаçса лартăмăр. Кам макăрчĕ, кам çĕрĕпех ним чĕнмерĕ... Ирхине каллех утă çулма тухса кайрăмăр. Пачах урăх кăмăлпа. Çав кунран пирĕн Çиçĕмкассинче юрă сасси çухалчĕ. Вăйă мĕн иккенне пĕр кун хушшинче манса кайрăмăр, – куççульпе аса илет Мария Алексеевна.

Маня та авăн уйăхĕ çитсен тантăшĕсемпе пĕрле шкула кайнă. Анчах та нумаях та вĕренеймен, вуннăмĕш класра ăс пухакансене Сăр хĕррине окоп чавма илсе кайнă. Вăл хăй çултисенчен ик-виçĕ çул аслăрах пулнă. Аякран куçса килнĕ хĕрача кĕçĕнреххисемпе вĕреннĕ. Сăр тăрăхĕнчен Çĕнĕ çул иртмесĕр те таврăнайман. Нушине çамрăксем сахал мар курнă кунта. Пăр катса чавасси пĕртте çăмăл пулман. Хĕл кунĕнче вăрманти йывăç ÿплере пурăнма тивнĕ вĕсен. Çуркунне енне çеç вĕренме тытăннă. «Вăрçа кайса пĕтнĕрен шкулсенче учительсем çитместчĕç. Пире, хĕрсене, çăва тухсанах РОНОна ячĕç. Тамарăпа иксĕмĕр Йĕпреçре, педагогсен курсĕнче пĕлÿ пухма тытăнтăмăр. Методика, педагогика вĕрентетчĕç, учительсемпе, ачасемпе хамăра шкулта мĕнле тытмаллине хăнăхтаратчĕç. Йĕпреçе çитме кăна 15 километрччĕ, кайран каялла таврăнмаллаччĕ. Калама çук ывăнаттăмăр. Ун чухне нимĕнле транспорт та пулман. Халь халăх кăштах та утасшăн мар», – тет Мария Алексеевна.

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче тантăшĕпе Тамарăпа Йĕпреç районĕнчи Туçа вăтам шкулĕнчи пĕрремĕш класа килнисене вĕрентме тытăнаççĕ.

### Михĕ айне пулман

Çемьере асли пулнăран Маньăна амăшĕ ытлах шеллемен. Çавна май килти мĕнпур йывăр ĕç ун çине тиеннĕ. Пĕчĕкскер çунă-тасатнă, йăмăк-шăллĕне кунĕпе те куçран вĕçертмен.

«Лашапа çÿресен киле вутă та, утă та илсе килме пулать. Бригадирпа калаçрăм, сана ырантан Йĕпреçе тырă леçме яратăп», – тенĕ пĕррехинче амăшĕ. Тем пекех хĕпĕртенĕ 13 çулти хĕр пĕрчи. Анчах та тырра илсе çитернисĕр пуçне йывăр лава пĕчченех пушатма тивнĕ. 80-90 килограмм таякан михĕсене иккĕмĕш хута илсе хăпартма ачана мар, мăн çынна та çăмăл пулман.

– Эпĕ ачаран яваплă пулнă, хирĕçлеме пĕлмен. Мĕн хушнине яланах итленĕ. Хамран пысăк хутаççене сĕтĕрнĕ чухне ал-ура чĕтретчĕ, – аса илет Маня аппа.

– Ытла та çамрăк-çке. Мĕн туса çÿретĕн кунта, михĕ айне пулатăн. Мĕнле хăпартăн-ха çÿлелле? – шелленĕ ял хĕрарăмĕсем.

Пĕррехинче çапла Йĕпреçрен таврăнаканскерне Павлушка тĕлпулнă. Вăл та çак пĕчĕк хĕрача тырă леçме çÿренинчен тĕлĕннĕ.

– Эсĕ çамрăк-ха. Ырантан ниçта та каймастăн. Татюк инкене калатăп, сана Йĕпреçе урăх ан ятăр, – тенĕ Маньăна хĕрхенсе.

### «Ку хĕр манăн»

Пудовкинсем ку яла Тюмень тăрăхĕнчен куçса килнĕ. Пысăк çемьене Канашра лашапа кĕтсе илнине халĕ те лайăх астăвать-ха Мария Алексеевна. Ашшĕ яла маларах килсе çурт туяннă. «Ачаран калама çук яваплă пулнă çав. Анне мана чи пĕчĕккине, ултă уйăхри Афоньăна, тыттарчĕ те: «Кăна лайăх илсе çитермелле. Унпа мĕн те пулин сиксе тухсан эсĕ айăплă пулатăн», – терĕ. Анчах та пысăк сăртран аннă чухне вĕсен çуни тÿнсе каять. «Эпир, саккăрăшĕ те, юр айне пултăмăр. Ман алăри Афоня та тухса ÿкрĕ. Пĕрин хыççăн теприне юр ăшĕнчен чавса кăларатпăр. Пурте тупăнчĕç, пĕр Афоня кăна çук. Таçтан пĕр ача чупса çитрĕ те вăл та пĕрле пирĕн пĕчĕккине шырама пуçларĕ, кăштахран мана Афоньăна пырса та тыттарчĕ. Ун чухне вăл маншăн Турă выраннех пулчĕ. Ачана юр айĕнчен сĕтĕрсе кăлараканни хайхи Павлушка пулнă-мĕн. Ялан ман тавра çÿренĕ вăл», – куç умне кăларать çав вăхăта Мария Алексеевна.

Кайран, темиçе çул иртсен: «Маня, сана пĕчĕк Афоньăна тупса панă чухнех суйласа илтĕм. Ку хĕр ÿссен манăн пулать терĕм», – пĕрре курсах куç хывни пирки пĕлтернĕ Павлуш.

### «Чĕрĕ апла, чĕрĕ»...

Павел Ермолаев вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн Йĕпреç районĕнчи Хурамалта кĕçĕн классен учителĕнче тăрăшнă. Кайран ăна Хусана пропаганда ĕçне вĕренме янă. 1939 çулта Хĕрлĕ Çара илсе кайнă. Маня патне Брестран кашни эрнерех çыру çырса тăнă салтак.

– Чикĕре лăпкă мар. Çĕрĕпе çывăрмаççĕ, темĕн турттараççĕ. Чун темĕн лайăх маррине туять, – çакнашкал хыпар янă вăрçă умĕн.

– Çук, пирĕн таса юрату кăна пулнă. Юнашар утма та, алăран тытма та вăтаннă эпир. Çапах та çырăвĕсем çын аллине лекесрен хăраттăм, вĕсене пысăк сумкăра, япаласен айĕнче усраттăм. Ялта пÿрт лартнă чухне чылайăшĕ çухалнăччĕ, кайран таçтан тупăнчĕç. Паянхи кун та çав çырусене пăрахма хăяймастăп, тĕркеме пытарса хутăм. Эпĕ вĕсене вуласа мĕн чухлĕ макăрман-ши? – чунне уçать Мария Алексеевна.

Вăрçă хирĕнчен вара пĕр çыру кăна килейнĕ. Çав куна питĕ лайăх астăвать Мария Пудовкина. «Эпĕ ялта садикре ĕçлеттĕм. Тахçантанпах ĕнтĕ Павлушран хыпар çукчĕ. Почтальон пĕр кунхине çыру килсе тыттарчĕ. «Ун алли, апла чĕрĕ», – кăкăр çумне тытрăм конверта», – куçне шăлать Мария Алексеевна.

Кăштахран ача садне Павлушăн ашшĕ çитнĕ. «Маня, ыйтма та лайăх мар та, пирĕн Павлуш сан пата çыру янă теççĕ. Чăнах-ши?» – пуçне чиксе хăюсăррăн калаçнă Анисим Ермолаев. Маня та вăтанса тин çеç çыру илнине пĕлтернĕ.

– Чĕрĕ апла, ман ывăл чĕрĕ, – тем пекех хĕпĕртенĕ Павăл ашшĕ. Кăштахран вĕсем те савăнăçлă хыпар илнĕ. Анчах та ку юлашки çыру пулнă.

Мария кашни кун хыпар кĕтнĕ. Почтальон хăйсен еннелле утнине курсан чарăнса тăнă, шанчăкпа пăхнă унăн куçĕнчен. Çук, пĕр çул, икĕ çул иртнĕ. Урăх пĕр çыру та килмен. Шанăç пĕтнĕ. 1945 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче, шăп Çĕнтерÿ кунĕнче Маня ялти учителе качча тухнă...

Мария Алексеевна ĕмĕр-ĕмĕр шкулта ачасене вĕрентнĕ. Унăн ĕç стажĕ – 50 çул. Вăл халĕ Шупашкарта пурăнать. 94 çула çывхараканскер пасара та, больницăна та пĕчченех çÿрет, кил-çуртне типтерлĕ тытать. Шел те, пĕр ывăлĕ çуралсанах, тепри тăватă çул каялла çĕре кĕнĕ. Хĕрĕ Аля амăшĕ патне кашни кунах килсе çÿрет. Мăшăрĕ Василий Давыдович, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннăскер, тахçанах çĕре кĕнĕ. Пĕр-пĕрне чунтан хисеплесе, килĕштерсе пурăннă вĕсем.



● ПАВЕЛ ЕРМОЛАЕВ.

**Елена АТАМАНОВА.**

**Тăванăм, вулаканăм!**

**"Чăваш хĕрарăмне" çитес çурçуллăхра илсе тăмашкăн çырăнтарас тапхăр малалла пырать. Унăн хакĕ кăшт ÿсни – 360,66 тенкĕ – пирĕн çыхăнăва татмасса шанас килет. Хаçат индексĕ: 11515.**



ЧĂВАШЛĂХ

# Чул çиеле тухмĕ, хăмла путмĕ

**Шупашкарти тивĕçлĕ канури Калерия Альмешкина тaçта та ĕлкĕрет: тирпейлӳçĕре ĕçлет, яла çӳрет, мăнукне пăхма пулăшать. Анчах компьютер пĕлменни вăхăтпа тан пыма чăрмантарнине туйса илнĕ вăл. «Кăçал мăнук парта хушшине ларĕ. Хĕр Мускава ĕçлеме кайсан Кирилпа пĕрле урок тумалла пулĕ. Халĕ килти ĕçсене пурнăçлама та Интернет кирлĕ теççĕ», – чунне уçать хĕрарăм. Наци библиотекинче тивĕçлĕ канурисене компьютерпа усă курма вĕрентни çинчен илтнĕ те пĕр уйăхлăх курса çыраннă Калерия Тихоновна.**

«Тӳлевсĕр пĕлӳ илес текенсен йышĕ çав тери пысăк. Çавăнпах черет çитиччен çулталăк çурă кĕтме тивет», – ăнлантарать электрон вулав залĕн пуçлăхĕ Наталья Джест. Кашни ушкăнра – 10-шар çын. Вĕсене тĕрлĕ сайта кĕме, çав вăхăтрах патшалăх пулăшăвĕн порталĕпе усă курма вĕрентеççĕ. Унсăр пуçне компьютер урлă тухтăр патне черет йышăнма, тăкаксене саплаштарма, çыру яма меллĕ.

Наталья Федоровна вĕренме килнисене библиотека ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ, залсене кĕртсе кăтартрĕ. Малашне çак хĕрарăмсем, вулавăш сайчĕпе усă курма вĕренсен, çакăнти тĕрлĕ мероприятие çитсе курма пултарĕç. Халĕ библиотекăра кĕнеке вулама та, «çавра сĕтелте» тĕрлĕ тытăмри специалистсене ыйту пама та, куравпа паллашма та, кино курма та май пур.

Экскурси вăхăтĕнче патшалăх символĕсен залне кĕрсе тухни нумайлăха асра юлĕ. Унта республика Пуçлăхне йышăнаççĕ. Çамрăксене чи кирлĕ документ – паспорт – параççĕ. Вĕрентекенсем урок йĕркелеме пултараççĕ. Мăшăрлану керменĕнчен тухакан арăмĕпе упăшки патшалăх символĕсен залне кĕрсе тухасси йăлана кĕрсе пырать. Çакăнта кашниех хăй республикăн пĕр пайĕ пулнине ăнланса илни иккĕлентермест.

Чăваш патшалăх символĕсене 23 çул каялла çирĕплетнĕ. 1992 çулта пĕлтернĕ конкурсра вун-вун ĕçрен Элли Юрьев геральдика мэтрĕ хатĕрленĕ ялавпа герба суйласа илнĕ. Çак художникăн символĕсем чăваш халăхĕн хăватне, историне, интересĕсене кăтартаççĕ.

Чăваш Республикин патшалăх ялавĕ сарăпа йĕпкĕн хĕрлĕ тĕслĕ. Сарă – хĕвел çути, вăл пурăнма вăй-хăват парать. Геральдика ăнлантарăвĕнче ылтăн тĕс пуянлăха, ыр кăмăллăха, вăя, шанчăклăха сăнлать. Йĕпкĕн хĕрлĕ тĕс халăх тĕрринче тĕл пулать. Геральдика чĕлхи çак тĕсре хăват, тĕрек, хăюлăх пытаранннине çирĕплетет. Ялаври сарă тĕслĕ анлăш чăвашсем хĕвел айĕнче тупнă вырăна сăнлать. Йĕпкĕн хĕрлĕ тĕс тăван çĕре кăтартать. Унтах «Пурнăç йывăççи» тата «Виçĕ хĕвел» эмблемăсем вырнаçтарнă.

Республика патшалăх гербĕнче те çак тĕссем пур. Ылтăн тĕслĕ хăмлапа çулçисенех илер. «Чул çиеле тухсан, хăмла путма пуçласан пирĕн хушăра ăнлану пулмĕ», – 985 çулта Атăлçи Пăлхарпа тунă килĕшӳре Киев кнеçĕ Владимир çакнашкал каланине кĕртнĕ. Герб щит майлă. Хăю çинче ылтăн сас паллисемпе «Чăваш Республики – Чувашская Республика» тесе çырнă. «Виçĕ хĕвел», «Пурнăç йывăçĕ» эмблемăсем пур.

Гимн – патшалăх суверенитечĕн палли. «Тăван çĕршыв» юрă кĕввине ЧР тата РФ искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Герман Лебедев хывнă, сăввине СССР çыравçисен пĕрлешĕвĕн членĕ Илья Тукташ çырнă. Çакăнти йĕркесем виçĕ çаврăма пĕрлештереççĕ. Çутçанталăк чĕрĕлнине, çемье йышне, пĕр-пĕринпе туслă пурăннине сăнлаççĕ.

Патшалăх символĕсем тăван тăрăха юратма, йăлайĕркене хисеплеме, чăвашлăха упрама вĕрентеççĕ. Манăн çĕнĕ пĕлĕшсем тавракурăма аталантармашкăн библиотекăна пĕччен мар, мăнукĕсемпе çӳреме пуçласси çинчен каларĕç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

РЕСПУБЛИКА КУНĔ

# Уява хатĕрленетпĕр

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин кăçалхи Республика кунне йĕркелес тĕлĕшпе канашлу ирттернĕ.

ЧР Пуçлăх администрацийĕн ертӳçин пĕрремĕш çумĕ Сергей Артамонов тĕп мероприятисен программипе паллаштарнă. Экономика аталанăвĕн министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Ольга Ланцова Шупашкарти экономика форумне, "Регионсем – чикĕсĕр хутшăну" курава, фейерверксен фестивальне хатĕрленни çинчен каласа кăтартнă.

Уяв программинче çавнашкалах – "Раççей çăлкуçĕсем" фестиваль, "Ăстасен Руçĕ" конкурс, Пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕ. Кăçалхи çĕнĕлĕхсемпе культура министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Татьяна Казакова паллаштарнă.

Республика кунĕпе çыхăннă мероприятисем Шупашкарта тата Канаш районĕнче иртĕç.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

ХĂТЛĂХ

# Малашлăхри хула

Шупашкар сити-менеджерĕ Алексей Ладыков И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн машиностроени факультечĕн студенчĕсемпе тĕл пулнă. «Хулара çамрăксене мĕн çитменнине калăр. Эпир сирĕн сĕнĕвĕрсене шута илме хатĕр», – тенĕ вăл. Студентсем малашлăхри Шупашкара сăнлама пуçланă. «Апла тăк эпир сирĕн ĕмĕтĕрсене пурнăçлăпăр. Проектсем хатĕр. Шупашкар 550 çул тултарнă тĕле планетари те, аквапарк та, спорт сооруженийĕсем те хута кайĕç», – уçăмлатнă Алексей Ладыков.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

ТЕРРОРА ХИРĔÇ

# Тĕп ыйту – хăрушсăрлăх

Акан 23-мĕшĕнче Республикăри террора хирĕç ĕçлекен комиссипе оперативлă штабăн ларăвĕ иртнĕ. Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата РФ Хăрушсăрлăх службин Чăваш Республикинчи управленийĕн пуçлăхĕ Сергей Софронов хутшăннă.

Хускатнă тĕп ыйту – май уявĕсенчи мероприятисене хатĕрленнĕ тата ирттернĕ вăхăтра халăха хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси. Çавăн пекех çĕртмен 20-21-мĕшĕсенче çăмăл атлетикăпа иртекен Европа чемпионачĕ те хăрушсăрлăх енчен çӳллĕ шайра иртмеллине палăртнă.

Халăх нумай пухăнакан вырăнсене терроргла ĕçсенчен сыхлас тĕлĕшпе мĕн тумаллине те палăртнă ларура. Уяв, спорт мероприятийĕ иртекен вырăнсене ятарлă хапха айĕнчен çеç кĕртĕç. Тĕрлĕ объекта пушар тата террор хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес тĕлĕшпе уйрăм йĕркепе сыхлĕç. Пухăннă çынсемпе ĕçлекенсемпе инструктажсем ирттерĕç.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

КОНКУРС

# Çулталăкри çĕнтерӳçĕсем палăрчĕç

Ĕнер Çĕнĕ Шупашкарти Химиксен керменĕнче вĕренӳ тытăмĕнчи чи маттур ĕçченсене чыслarĕç.

«Чăваш Енри çулталăк вĕрентекенĕ – 2015» ята тивĕçессишĕн кăçал 26 учитель /республикăри кашни муниципалитетран/ тупăшнă. Чи лайăххине палăртас тĕллевпе виçĕмкун та мастер-классем иртнĕ. Пĕтĕмлетӳсем тунă хыççăн Шупашкар районĕнчи Салапайкассинчи вăтам шкулта акăлчан чĕлхи вĕрентекене Светлана Ильинана çитекен пулманни палăрнă.

Çак кунсенчех професси ăсталăхне кăтартма май паракан конкурссем социаллă педагогсемпе психологсемшĕн те вĕçленнĕ. «Чи лайăххи» титулшăн кăçал 17 социаллă педагогпа 23 педагог-психолог тупăшнă. Марианна Яковлева /Çĕрпӳри аграрипе технологисен техникумĕ/ – «Чăваш Енри социаллă педагог – 2015», Алина Тимофеева /Шупашкарти психологипе педагогика тата медицинăпа социаллă пулăшу кӳрекен «Содружество» центр/ – «Чăваш Енри педагог-психолог – 2015» ятсене тивĕçнĕ.

Кăçалхи «Çулталăк воспитателĕ» те паллă. Вăл – Шупашкарти 64-мĕш ача садĕнче тăрăшакан Екатерина Давыдова.

Класс ертӳçисенчен вара чи пултарулли Вăрнарти И.Н.Никифоров ячĕллĕ вăтам шкулта тăрăшакан Наталия Самарина пулни палăрнă.

**Татьяна НАУМОВА.**

ШУХĂШ

# Тавралăх илемĕшĕн кашни явапла

**Елена АТАМАНОВА**

**Шупашкар чылайăшне хăйĕн тасалăхĕпе, илемпе тата тирпейлĕхĕпе илĕртет. Анчах та тĕттĕм тăкăрлăксем хула тĕп урамĕсенчен палăрмаллах уйрăлса тăраççĕ çав.**

**Нумай пулмасть аякран куçса килнĕ пĕлĕшĕм Шупашкара лайăхах пĕлмест. Нӳхреплĕ гараж туянас шухăшлăскерпе кану кунĕсенче хулан тĕрлĕ кĕтесне çитсе килтĕмĕр. Пĕлтерӳ тăрăх малтан Ленин комсомолĕн урамне çул тытрăмăр. Ку тăрăхра чăн та гараж нумай. Анчах та вĕсен хушшипе çынсем мĕнле иртсе çӳреççĕ-ши? Çӳп-çап контейнерĕсем туп-тулли. Картон, пластмасса савăт тата кулленхи пурнăçра усă курма пăрахнă ытти япала сапаланса выртни общество транспортĕнче пынă чухне те курăнать. Энгельс урамĕнче те гараж чылай. Кунта та мĕн кăна йăваланса выртмасть-ши? Кивĕ сĕтел-пуканпа тумтир таранах. Халăх лайăх пурăнма тăрăшнă май çĕнĕрен çĕннине туянать. Çавна май хăшĕ-пĕри усă курма пăрахнине урама, çын курман çĕре, кăларса ывăтать. Çавăнпах çырма-çатра, гараж таврашĕ çӳп-çаппа тулать. Кунĕпех тирпейсĕр тăкăрлăксемпе «киленсе» çӳренĕ хыççăн пĕлĕшĕмĕрĕн туянас шухăшĕ те сӳнчĕ. Богданка тăрăхне кайма тухнăскер çулран пăрăнчĕ.**

**Тепрехинче çула кĕскетес шухăшпа Трактор тăвакансен культура керменĕ хыçĕнчи вăрманпа утса тухрăмăр. Çулла кунта пĕрмай халăх хĕвĕшет. Хальлĕхе çутçанталăкра канакан сахалрах-ха. Çапах унта-кунта паян та çӳп-çап йăваланса выртать. Пушă кĕленче, пластмасса чашăктирĕк… Культура керменĕ хыçĕнче çӳп-çап контейнерĕсем те вырнаçтарнă. Вĕсем вăрманта та пур. Каяш хумалли хатĕрсем пуш-пушах, йĕритавра – çӳп-çап.**

**Тавралăха варалакана аякра шырама кирлĕ те мар, вĕсем çакăнти иртен-çӳрен, кунта канма килекен…**

**Нумай пулмасть тăвансен Кăнтăр районĕнче вырнаçнă дачине кайса килме тиврĕ. Чарăнуран ытла аякра та мар. Ку тăрăхра çӳп-çапа тахçантанпа пуçтарман пек туйăнчĕ. Хуçăлнă, каснă йывăç-турата унта та кунта купаласа хунă, анчах та тиесе кайман. Карта çумĕнче эрех кĕленчисем, ытти ăпăр-тапăр йăваланса выртать. Ĕçлеме пăрахнă сивĕтмĕш, кивĕ магнитола пайĕсем те куç тĕлне пулчĕç.**

**Çĕнĕ Кăнтăр районĕнче вырнаçнă Шупашкарти 1-мĕш клиника больницинчен аялалла, Кăнтăр поселокĕ еннелле ансан таçта çити тăсăлакан пысăк çырма пур. Çыран айккипе кунта та гараж нумай. Анчах та вĕсен патне çывхарма та çук. Ку тăрăхра темиçе çул нимĕн те тасатман пек туйăнать. Çырми часах хула çӳп-çапĕпе тулать ахăр.**

**Октябрь кĕперĕ айĕнче çулла та таса марччĕ. Халĕ те çавах. Кунта пуçтарса та ĕлкĕреймеççĕ пулмалла. Çул айккипе дачăсем вырнаçнă. Шăпах вĕсен хуçисем мĕнпур ăпăр-тапăра çакăнта килсе пăрахаççĕ те ĕнтĕ. Шăтăк-çурăк витресем, кивĕ сĕтел-пукан тата тем те пĕр выртать купара. Кĕпер айĕнче никам куçĕ тĕлне те пулмасть тенĕши?**

**Чăваш Енре санкцисĕр çӳп-çап куписене тĕп тăвас енĕпе кĕрешмеççĕ мар. Хулара «Çӳп-çапа хирĕç – селфи» акци те ирттернĕччĕ. ЧР çутçанталăк министерстви республика çыннисенчен тирпейсĕр вырăна сăнланă сăнӳкерчĕксене пĕр уйăх йышăннă. Кайран çавна вырăнти хăйтытăмлăх ĕçченĕсене ярса панă, санкцисĕр çӳп-çап куписене пĕтерме хушнă. Ку акцие Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта, Çĕмĕрлере тата Шăмăршăра пурăнакансем уйрăмах хастар хутшăннă.**

**Тасамарлăх çуркунне шывпа юхса каймасть, çĕр çинчех выртса юлать. Хула илемĕ йăлтах çынсенчен килет. Тавралăх илемĕшĕн кашниех явапла.**

ЛИТЕРАТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ

# «Нарспи» тĕрлĕ чĕлхепе янăрарĕ

**"Библиокаç" – çуллен йĕркелекен вулав фестивалĕ. Вăл 2012 çултанпа çĕршывĕпех иртет. Кăçал ăна Раççейри – Литература, Чăваш Республикинчи Константин Иванов çулталăкĕнчи тĕп мероприятисен шутне кĕртнĕ.**





Ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче каç кÿлĕм Наци библиотекине тĕрлĕ ÿсĕмри çынсем пуçтарăнчĕç. Алăкран кĕрсенех Константин Ивановăн "Нарспи" поэмине вулани илтĕнчĕ. Çакăнта килнисенчен чылайăшĕ поэма сыпăкĕсене пăхмасăр пĕлет. Эпĕ те ĕмĕрлĕхех ăстăнра çырăнса юлнă çав йĕрксене Марианна Красновăпа пĕрле ăшра вуларăм. Конкурса хутшăнас тесе ятарласах чăвашла тумланса килнĕ вăл. Тĕрлĕ чĕлхепе янăрарĕ "Нарспи". Çакăнти йĕркесене кашниех чун витĕр кăларма тăрăшрĕ.

Çапах та кам вăл Нарспи? Олег Прокопьев журналист йĕркеленĕ "çавра сĕтелте" литература тĕпчевçисем – Елена Лебедева, Виталий Станьял, Атнер Хусанкай, Юрий Артемьев тата ыттисем – хăйсен шухăшĕсене палăртрĕç. Кашниех хăйне май тĕрĕс каланăн туйăнчĕ. Юлашкинчен сăмах илекенсем пĕрешкел пĕтĕмлетÿ патне пырса тухрĕç: авторăн поэмăна инкеклĕ вĕçлемесĕр май пулман.

Çав вăхăтрах мюзикл тăрăх ÿкернĕ "Нарспи" фильм пуçланчĕ. Акă пĕлтĕрхи кинофестиваль вăхăтĕнче курнăччĕ. Андрей Васильев режиссер жюри членĕсем унăн ĕçне пысăк хак панине аса илчĕ. Ун чухне куракансем зала вырнаçайманни, çавăнпах ик айккипе пукан лартса пăхни унăн кăмăлне çĕкленĕ. Хальхинче те халăх йышлă пуçтарăннине палăртса хăварас килет. Унсăр пуçне библиотека кинозалĕсенче Константин Иванов пултарулăхне халалланă "Алран кайми" тата "Доктор Бассам. Приключения иностранца в России" документ фильмĕсем кăтартрĕç.

"Нарспие" ÿкеретпĕр" лапамра нумайăшĕ хăйĕн ăсталăхне тĕрĕслесе пăхрĕ. Ăна кашни хăйне май курниех кăсăклă. Нарспи шăпине пĕлмен çын, паллах, аллине хутпа кăранташ тытас çук.

Патшалăх тытăмĕнче ĕçлекен Светлана Павловăпа Дарья Федорова XVIII – XIX ĕмĕрте пичетленнĕ кĕнекесемпе кăсăкланчĕç. Архиврва упранакан пурлăха перчеткесĕр тытма юрамасть.

Зинаида Воронова тата Евгения Жачева ăстасен ĕçĕсене халăх чăрăнсах сăнать. Вĕсенче – чăваш халăхĕн культури, йăли-йĕрки, ĕмĕртен ĕмĕре куçакан пуянлăхĕ. Акă библиотека ĕçченĕ Наталья Морева çăм арлать. "Çамрăксем кĕнчелене тытсах пăхаççĕ", – ăнлантарать вăл. Наталья Васильевна ку ĕç хăйне евĕрлĕхĕ çинчен каласа кăтартать. Ĕлĕк хĕрсем кĕнчелепе ларма тухнă, чăлха-нуски çыхнă, тĕрĕ тĕрленĕ.

Фойерех чернилпа çырса пăхма, истори документĕсемпе паллашма, почта урлă тĕнчен тĕрлĕ кĕтесне хыпар яма май пулчĕ. "Библиокаç" программине вăйăсем, экскурсисем, кĕнеке куравĕсем пуянлатрĕç. Юрăкĕвĕ мероприятие уяв сĕмĕ кĕртрĕ.

Хула-ял ытти библиотекинче те ăсталăх класĕсем, музыка рингĕсем, ятарлă акцисем иртрĕç. Çакă кĕнеке тусĕсен йышне пысăклатма пулăшасси иккĕлентермест.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăнÿкерчĕкĕсем.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Кĕнеке – пĕлÿ çăлкуçĕ



**Муркашри тĕп библиотекăра вăй хуракансем Культура çулталăкне сумлăн ăсатса Литература çулталăкне числăн кĕтсе илчĕç. Чăваш Енри Константин Иванов çулталăкĕнче чылай мероприяти йĕркелеме ĕлкĕрчĕç. Çакă ятарлă ĕç планĕпе килĕшÿллĕн пулса пырать. Библиотекăра иртекен мероприятисене тĕрлĕ ăру çыннисем хаваспах килеççĕ.**

Район, республика шайĕнчи мероприятисене те хастар хутшăнаççĕ вулавăш ĕçченĕсем. Хисеп хучĕсем, Тав çырăвĕсем, Дипломсем илме тивĕç пулчĕç вĕсем. Республика тулашĕнчи культура ĕçченĕсемпе те туслă çыхăнусем тытаççĕ, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашаççĕ.

Библиотека фондне те çулленех пуянлатса пыраççĕ. Муркаш тăрăхĕнче çуралнă çынсемпе те тăтăшах тĕлпулусем ирттереççĕ. Акă Василий Сипет писательпе тĕлпулу каçĕ иртрĕ.

Эпир вĕсене, кĕнеке, хаçат-журнал вулама кăмăллакансем, çаплах аван ĕçлесе пыма сывлăх сунатпăр, тав сăмахĕ калатпăр.

Кĕнеке – пĕлÿ çăлкуçĕ. Çакна пурин те асра тытасчĕ пурнăçра. Унпа туслашсан пурнăç тĕрлĕ тĕспе сăрланать.

**Игорь МАЙКОВ.**
Муркаш районĕ.

ПУЛТАРУЛĂХ

# Савăнăçпа пурăнар

**Культура тытăмĕнче ĕçлекенсем тăрăшнипе пĕлтĕр Йĕпреç районĕнчи Липовка ял клубĕ çумĕнче «Çăкалăх» фольклор ушкăнĕ йĕркеленчĕ. Ку ушкăна Липовкăпа Смычка клуб администраторĕсем Альбина Митеховăпа Анатолий Тимофеев ертсе пыраççĕ.**

Пирвайхи хут «Çăкалăх» ушкăн Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ ячĕпе Липовка шкулĕнче уяв концерчĕ йĕркелерĕ. Куракансем вырăнти артистсене хапăл туса йышăнчĕç. Л.Тумаланова, И.Дмитриева, В.Николаева, Е.Краснова пуçарнă фольклор ушкăнне каярахпа М.Мамуткина, Р.Макарова, Ю.Малинина, Н.Андреева, Т.Кондратьева, Н.Иванова, В.Шмелева çÿреме пуçланă.

Амăшĕн кунне халалласа «Çăкалăх» ушкăн черетлĕ концерт кăтартрĕ. Вĕсен юрласташлас, сăвă калас ăсталăхĕ ÿссе пыни палăрчĕ.

Нарăсăн 2-мĕшĕнче нумай çул пĕрле пурăнакан мăшăрсене числаса ял клубĕнче уяв каçĕ иртрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Чугаров, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Карсаков Валерий Александровичпа Раиса Ильинична Макаровсене – ылтăн туйпа, Михаил Евстихеевичпа Анна Васильевна Константиновсене кĕвĕр туйпа саламларĕç.

Тăван çĕршыв хÿтĕлевçин кунĕнче «Çăкалăх» ушкăн «Катюша» юрра уйрăмах асра юлмалла шăрантарчĕ. Кашни юрра-ташша куракансем хыттăн алă çупса йышăнчĕç.

Çăварни те кăçал тĕлĕнмелле савăнăçлă иртрĕ. Уява Смычкăпа Малиновкăсем те килчĕç. «Çăкалăх» фольклор ушкăнĕ халăха юрă-ташăпа савăнтарчĕ. Липовкăпа Смычка клуб администраторĕсем тĕрлĕ вăйă выляттарчĕç. Вĕрен туртса вăй виçессипе хĕрарăмсем арçынсене парăнтарчĕç! Юлашкинчен катемпие чĕртсе çунтарса хĕле ăсатрĕç.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне Смычка ял клубĕнче паллă турăмăр. «Çăкалăхпа» «Тантăш» фольклор ушкăнĕсем залраларакансене илемлĕ ташăсемпе, савăк юрă-кĕвĕпе савăнтарчĕç. Мария Мамуткина Валери Туркайăн тата ытти поэтсен сăввисене пăхмасăр вуларĕ. Шкул ачисем те аслисенчен юлмарĕç. 7-мĕш класра вĕренекен Юлия Кузьмина куракансене уçă сассипе тата илемлĕ чăваш тумĕпе тыткăнларĕ. «Çăкалăх» фольклор ушкăнĕ халăх пултарулăхĕн иксĕлми пуянлăхне упрать.

**Людмила ТУМАЛАНОВА, Липовка ял вулавăшĕн ертÿçи, Мария МАМУТКИНА, ĕç ветернĕ.**



ПУЛТАРУЛĂХ

# Çамрăксем ăмăртса юрларĕç

**"Кĕмĕл сасă" фестиваль-конкурса кашни çулах Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнче тĕпленнĕ йăхташăмăрсем хутшăнаççĕ. Çакă çамрăксене сцена çинче хăйсен вырăнне тупма пулăшать, туставанлăха хаклама, чăваш эстрадине аталантарма май парать.**

**Фестиваль кăçал Чăваш чĕлхи уявĕнче, Аслă Вĕрентекенĕмĕр Иван Яковлев çуралнă кунĕнче иртрĕ. "Кĕмĕл сасă" конкурса Раççейре Литература, Чăваш Енре К.В.Иванов çулталăкĕ иртнине тата Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнине халалланă.**

ЧР культура институчĕ енелле халăх ушкăнăн-ушкăнăн утать. Урамра çурхи çил каснине, юрпа хутăш çумăр çунине те пăхса тăман çынсем. Çамрăксен пултарулăхĕпе паллашма йышлăн пухăнчĕ куракан. Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Николай Угаслов çамрăксене ăнăçу суннă май фестиваль-конкурс чун уявне çавăрăннине палăртрĕ. "Кĕмĕл сасă" йышши мероприяти чăвашлăха, эстрада юррисене аталантарма, йăх-несĕлтен куçакан пуянлăха упрама, йăла-йĕркене пăхăнса пурăнма пулăшни тавра сăмах пуçарчĕ.

Кăçал конкурса пĕтĕмпе 22 çамрăк хутшăннă. Вĕсенчен нумайăшĕ – хамăр тăрăхран. Республика тулашĕнчен çула тухнисем те чылайăн. Хăнасем Шупашкара Пушкăрт, Тутар республикисенчен, Мурманскран, Иркутскран, Чĕмпĕртен килсе çитнĕ.

Конкурсантсене темиçе номинаципе хакларĕç. "Чи сăпайлă юрăç" ята Анна Васильева /Шупашкар хули/ тивĕçрĕ. "Чи пархатарлă юрăç" – Анатолий Анисимов /Елчĕк районĕ, Элпуç ялĕ/. "Хăйне евĕр ăста юрлакан юрăç" ята Наталья Головина /Шупашкар хули/ çĕнсе илчĕ. Ăна çынсем "Нарспи" мюзиклти евчĕ рольне ăста калăпланинчен лайăх пĕлеççĕ. "Куракансем килĕштернĕ юрăç" номинацире Алексей Алексеев /Нурлат хули/ çĕнтерчĕ. "Чи çепĕç чăваш юрăçи" – Людмила Белова /Чĕмпĕр хули/. Чăваш наци конгресĕн хаклă парнине Пушкăртстанран килнĕ Виолета Станишевская тивĕçрĕ. Хӳхĕм те чипер пикене Николай Угаслов тухья парнелерĕ. Мурманскран килнĕ Дина Агеева тата Пушкăртстан пики Екатерина Емельянова виççĕмĕш вырăна пайларĕç. Дина Агеева Тутарстанри Çĕпрел районĕнчи Матак ялĕнчен. "Мăшăр çар çынни пулнă май Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесне çитетĕп. Халĕ Мурманскра пурăнатпăр. Фестивале мăшăрпа иксĕмĕр килтĕмĕр. 2009 çулта Тутарстанра республика шайĕнче иртнĕ "Чăваш шăпчăкĕ" конкурсра мала тухнăччĕ. Нумай пулмасть "Мускав-транзит-Мурманск" Пĕтĕм тĕнчери конкурсри фольклор номинацийĕнче пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕм", – паллаштарчĕ хăйĕнпе Мурманск пики. Пушкăрт тăрăхĕнчи Пишпӳлекрен килнĕ 19 çулти Екатерина Ĕпхӳри ӳнер училищинче вĕренет. Вăйлă сасăллă хĕре жюри ниепле те асăрхамасăр хăварма пултараймарĕ. Пушкăртстан пикисем Наталья Спиридоновăпа Олеся Пескова виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç. Вĕсем иккĕшĕ те Çтерлĕ хулинчи "Сарпи" ансамбльте юрлаççĕ. Çĕньялта çуралса ӳснĕ Натали Елена Шурту репертуарĕнчи "Тăванăм ту айккипе ут çулать" юрăпа халăха тыткăна илчĕ. Самантлăха пурте шăпланчĕç. Юрăри хурлăхлă та тунсăхлă йĕркесем курма килнисене тарăн шухăша путарчĕç мар-и? Тăванран хакли урăх кам пултăр çак çĕр çинче? Илемлĕ юрă шăраннă май куççуль кусран мар, чунранах пăчăртанса тухрĕ пулĕ. Пушкăртстанра çулсерен иртекен "Шăпчăк сасси" фестиваль-конкурсра гран-прие ахальтен тивĕçмен Наталья Спиридонова. Пĕрремĕш вырăна "Анне – чи сывăх тус" юрăпа Анна Андреева /Шупашкар районĕ, Пархикасси ялĕ/ тухрĕ.

Кăçалхи конкурсантсенчен пĕри тепринчен вăйлăрах пулни сисĕнчĕ. Вĕсенчен чылайăшĕн музыка пĕлĕвĕ пур. Çĕнтерӳçĕсене палăртма жюрие ахăртнех çăмăл пулмарĕ.

Гран-прие Комсомольски хĕрĕ Ксения Гришина тивĕçрĕ. Вăл 15 çулта, саккăрмĕш класра вĕренет. "Савнă Шупашкар" юрă мала тухма пулăшрĕ ăна. Кĕмĕл сасăллăскер куракансене те, жюрие те килĕшрĕ. Сумлă конкурсра ят çĕнсе илни Ксение пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма хавхалантарĕ. Ăнăçу сунатпăр ăна!

**Елена АТАМАНОВА.**



ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Илемĕпе илĕртет Мушар



**Ялсем пушанни, хуçасăр пӳртсем нумайланни, çĕннисем сахал хăпарни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Çамрăксем паян ытларах хула çывăхнелле туртăнаççĕ. Çуралнă тăрăхра тĕпленес текен çав тери сахал.**

Паян вулакана паллаштарма тĕв тунă çамрăк мăшăр та – тăван яла таврăннисен йышĕнчен мар. Анчах Герасимовсем ĕçлесе пурăнма пач палламан Куславкка тăрăхне суйласа илнĕ. Мушарта çурт хăпартас ĕмĕтпе пурăнаççĕ халĕ çамрăк вĕрентекенсем. Çутă тĕллевĕ патне майĕпен çывхараççĕ темелле-ши? Ара, çĕр лаптăкне суйласа илнĕ ĕнтĕ, хут ĕçĕ пырать.

– Çав тери илемлĕ вырăнта вырнаçнă ял. Çывăхра Атăл юхса иртет, вăрман кашлать. Çын куçĕнчен пытаннă вăрттăн кӳлĕ те пур вăл таврара. Улăхĕ-çаранĕ те мĕн тери илемлĕ! – хавхаланăвне пытармасть Арсентий Евгеньевич.

Хула каччи вăл. Шупашкарта çуралса, хуларах ӳснĕ. Пурнăç тума вара яла куçма тĕллев лартнă.

– Лăпкă, канлĕ ялта. Çӳлти хутрисем тапăртатни илтĕнмест. Шав та çук. Сывлăшĕ те çав тери усă, – тет кил хуçи.

Шел, чылайăшĕ ялта пытаннă ырлăха хаклама пĕлмест. Герасимовсем вара çакна чунпа туяççĕ. Çавăнпах çак тăрăха килнĕ те. Нумай-и, сахал-и, ĕçе пуçăнни часах пĕр вĕренӳ çулĕ пулать.

– Вĕрентекен ĕçĕ кăсăклă. Студент чухне ытти сферăра та ĕçлесе курнă. Ачасемпе пурпĕр интересрĕх. Пултарулăха аталантарма та май пур. Вĕренекенсем те тĕрлĕ кружок йĕркелесен хаваспах çӳреççĕ. Чылайăшĕ килте ларасшăн мар. Çав вăхăтрах компьютер, телефон ăшне путнисем те пур, – тет "Çутçанталăк тусĕсем" кружока ертсе пыраканскер. – Тавах, шкулпа юнашар кӳлĕ пур. Унта вара кайăксем çав тери нумай: акăш та, ăмăрткайăк та, кăвакалĕ темиçе тĕрлĕ... – вĕçен кайăк йышлишĕн ачасенчен ытларах хăй савăннăнах туйăнать.

### Талпăнман, анчах вĕреннĕ

Мари Эл хĕрĕ Наталья Куславккари 2-мĕш вăтам шкулта акăлчан тата нимĕç чĕлхи вĕрентекенĕнче тăрăшать.

– Эпĕ ача чухне нимĕç чĕлхи вĕреннĕ. Аттепе пĕртăван Валентина Леонидовна çав тери çирĕп ыйтатчĕ. Вăхăт иртнĕ май ют чĕлхе шĕкĕлчесси килĕшме пуçларĕ. Анчах вĕрентекен пулассишĕн ăнтăлман эпĕ. Ку ĕç пачах илĕртместчĕ. Практикăран та хăраттăм. Ачасемпе хама епле тытмаллине те пĕлместĕм, – каласа кăтартать ЧППУн ют чĕлхесен факультетĕнчен вĕренсе тухнăскер. – Практикăри пĕрремĕш урок. Ура чĕтрет, сасă тухмасть... Каштахранах çав тери килĕшрĕ, ачасене те юратрăм. Пиллĕкмĕш курсри иккĕмĕш практикăна вара чăтăмсăррăн кĕтрĕм, – пытармасть учитель пулма вĕреннĕ, анчах тăваттăмĕш курсчен ку ĕçрен хăраса пурăннăскер.

– Малтанах шкулта çăмăл марччĕ. Анчах вăхăт иртнĕ май вăрансан унта хавас кăмăлпа çӳренине, чун туртнине туйрăм. Ачасем те кăмăлласа йышăнчĕç. Эпĕ те хамăн ĕçе юратма пуçларăм, – тет Наталья Витальевна.

### Киле каяс килменрен...

Пĕлтĕр, Наталья диплом илсен, мăшăрланма хатĕрленнĕ çамрăксем ăçта тĕпленессине палăртма ларнă. Вĕрентекенсем ăçта кирлине тишкернĕ. Çĕнĕ вырăнта епле кĕтсе илесси хăратнă çамрăксене, шухăшлаттарнă. Анчах кăлăхах пăшăрханнă вĕсем. Вĕрентекенсене икĕ шкулта та çав тери кăмăллăн та ăшшăн йышăннă.

– Иксĕмĕр те питĕ лайăх коллектива лекрĕмĕр. Нумай çул ĕçлекенсенчен вĕренмелли нумай-ха. Çамрăк специалист килнине савăнсах йышăнчĕç курăнать. Çĕнĕ çынран çĕнĕ шухăшсем кĕтеççĕ, çавăнпах "тăпăлтараççĕ" кăна. Малтанах уроксем вĕçленсенех киле таврăнаттăм пулсан халĕ васкамастăп, шкулта ытларах тытăнса тăрас килет. Çавăнпах тепĕр чухне килти ĕçе япăхрах вĕреннĕ пĕр-пĕр ачана урок хыççăн хăваратăп, – кулать çармăс хĕрĕ.

Журналистика кружокне те ертсе пырать вăл. Хăй вăхăтĕнче шкул хаçачĕн тĕп редакторĕ пулнăскер халĕ ку ăсталăхне те ачасемпе пайлать.

Мари Республикинче çуралнăскер мĕншĕн Шупашкара çитнĕ-ха? Шăпи туртнă пулинех. Тепĕр тесен, тĕлĕнмелли те çук. Ку хулара тăванĕсем пурăннăран Наталья шкулта вĕреннĕ чухнех ашшĕ-амăшĕпе хăнара пĕрре мар пулнă. Илемĕпе тыткăнланă ăна тĕп хуламăр. Çавăнпах аслă пĕлӳ илме те Чăваш Енех килнĕ – ку ыйту та çуратман. Пушшех те – инçе те мар.

### Кайăксене юратса

Арсентий Евгеньевич Елчĕкри вăтам шкулта биологипе хими вĕрентет. Студент чухнех вăл Шупашкарти Калинин районĕнчи "Кайкăр" экологи те биологи центрĕнче тăрăшнă. /Шел, халĕ вăл ĕçлемест/. Хăйĕнче таврапĕлӳçĕ юнĕ чупнине туйсах-тăр диплом илсен пĕлĕвне аспирантурăра тарăнлатма тĕв тунă.

– Шкулта вĕреннĕ чухнех çамрăк экологсен, туристсен, биологсен секцийĕсене çӳреттĕм. Каярах туризм енĕпе инструктор пулса тăтăм, кĕçĕннисемпе ĕçлеме шанатчĕç. Çавăнпах ЧППУна çул тытрăм. Экологи лагерĕсене çӳреттĕмĕр, наука ĕçĕпе аппаланаттăмăр. Университетра вĕреннĕ чухнех нумай çĕре çитнĕ. РАМН институчĕн волонтерĕсен йышĕнче Карелири кайăксен миграцине тĕпчеме те кайнăччĕ. Байкал тăрăхĕнче те пулнă, – тет Арсентий.

Ытларах кайăксем илĕртнине пытармасть вăл. Ахальтен мар ачаранах – çамрăк орнитологсен йышĕнче. Кашни курс, диплом ĕçĕ – пурте кайăксене çыхăннă. Диссертацие те икĕ çунатлисен халалланă.

### Хĕлле – похода!

Хĕр иккĕмĕш курс пĕтерсен паллашнă çамрăксем. Уçăлса çӳренĕ май хăйсене çутçанталăка туртнине ăнланнă, çавăнпах ялта тĕпленме туртăннă. Хăйсен çурчĕ, сад пахчийĕ пирки пĕрре мар ĕмĕтленнĕ каççерен.

– Эпир мăшăрăмпа пулă тытма юрататпăр. Шыв хĕрне ачаран çӳреттĕм аттепе. Интереслĕ-çке. Арсентий – опытлă пулăç. Малтан çуллахине çеç пĕлеттĕм. Упăшкам хĕлле те пулă тытма вĕрентрĕ. Çĕр каçмалли походсене те хăнăхрăм. Хĕллехисене те. Ку маншăн малтан пачах ăнланмалла мар пуламччĕ. Эпĕ питĕ шăнатăп. Килтен – чарăнăва, чарăнуран университета çеç чупса çӳрекенскер хĕлле /!/ похода кайрăм. Арçынсем вут чĕртрĕç, палаткăсенче те ăшăччĕ. Тĕлĕнтĕм. Шăнмарăм та. Малтан хампа мĕн илмеллине те пĕлместĕм. Хăнăхса ситрĕм те – черетлĕ канмалли кунсенче похода мĕншĕн кайманнине ăнланми пултăм. Халĕ вăхăт сахалрах, анчах пурпĕр çутçанталăка тухма манмастпăр. Май уявĕсенче юлташсемпе çырмапа каяс йăла пур. Темиçе кимме пĕрпĕринпе çыхатпăр та Йошкар-Оларан Шупашкара çити ярăнатпăр, – тет Наталья.

Çамрăк мăшăр килĕштерсе пурăнтăр тесен чи малтан пĕр-пĕрин кăсăкланăвне пайлани кирлĕ теççĕ. Герасимовсен ку тĕлĕшпе пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Çутçанталăка юратни те, ялта пурăнма ăнтăлни те пĕрлештерет çамрăк чунсене.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.



## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Хĕрлĕ кăшманпа пĕвер салачĕ



**3 хĕрлĕ кăшман, 800 грамм чăх пĕверĕ, пуçлă 2 сухан, тăвар, пăрăç, майонез, тип çу кирлĕ.**

Хĕрлĕ кăшмана пĕçермелле. Сухана – вĕттĕн, пĕвере шултран турамалла. Хĕрлĕ кăшмана теркăламалла. Сухана ăшаламалла, пĕвер хушса 5-7 минут пăшăхламалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

### Какайпа, çăмартапа

**300-400 грамм чăх какайĕ, 1 пачка чипс, 2-3 çăмарта, сыр, майонез, симĕс сухан кирлĕ.**

Пĕçернĕ çăмартапа какая тăваткалласа турамалла. Салата сийлесе /вĕтетнĕ чипс – чăх какайĕ – çăмарта/ хăпартмалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле. Çиелтен теркăланă сыр, вĕттĕн тураннă симĕс суханпа укроп сапмалла.

### Икерчĕ

**500 грамм чăх пĕверĕ, 1 çăмарта, 2 апат кашăкĕ çăнăх, тăвар, тип çу кирлĕ.**

Пĕвере аш арманĕ витĕр кăлармалла. Ăна çăмартапа, çăнăхпа пăтратмалла, тăвар хушмалла. Икерчĕсене тип çупа ăшаламалла.

### Кăмпапа сыр яшки

**4 çĕрулми, 300 грамм шампиньон, шăратнă 4 сыр, 100 грамм вермишель, 100 грамм услам çу, тăвар, техĕмлĕх, симĕс сухан, тип çу кирлĕ.**

Тăваткалласа туранă çĕрулмие вĕрекен шыва ямалла. Шултран каснă кăмпана тип çупа ăшаламалла. Теркăланă сырпа кăмпана кастрюле ямалла, сыр ирĕлсен вермишель, услам çу, вĕттĕн каснă симĕс сухан, тăвар, техĕмлĕх хушмалла.

### Пĕверпе пахчаçимĕç

**500 грамм пĕвер, 300 грамм купăста, 1 пылак пăрăç, пуçлă 1 сухан, 200 грамм шĕвĕ хăйма, тăвар, техĕмлĕх, укроп, тип çу кирлĕ.**

Пĕвере шывра 1 сехет тытмалла, унтан тураса ăшаламалла. Вĕттĕн каснă купăстана, сухана, пылак пăрăçа уйăрммăн пăшăхламалла, пĕвер, шĕвĕ хăйма, тăвар, техĕмлĕх хушмалла.

### Симĕс суханпа сыр кукăлĕ

**Хатĕр чуста, 2 çăмарта, 1 çăмарта сарри, шăратнă 2 сыр, симĕс сухан, укроп, петрушка кирлĕ.**

Чустана 2 пая уйăрмалла. Симĕс сухана, укропа, петрушкăна вĕттĕн турамалла. Çимĕçсене кăпăклантарнă çăмартапа пăтратмалла.

Чустан пĕр пайне çатмана сармалла, ăшне хурса теприн пе витмелле. Çиелтен çăмарта сарри сĕрмелле. Кукăле духовкăра 30 минут пĕçермелле.

### Батончик

**100 грамм исĕм, 100 грамм хура слива, 3 апат кашăкĕ сĕлĕ хăрпăкĕ, 50 грамм мăйăр, 1 банан, 1 çăмарта шурри кирлĕ.**

Типĕтнĕ улма-çырлана, мăйăра блендерпа вĕтетмелле. Банана вилкăпа пусса çемçетмелле. Çимĕçсене çăмарта шуррипе, сĕлĕ хăрпăкĕпе пăтратмалла, лимон сĕткенĕ хушма юрать. Çатмана çулăма чăтăмлă хут сармалла, хутăша 5 сантиметр хулăнăш тултармалла. Ăна 100 градуслă духовкăра 1-1,5 сехет пĕçермелле. Вĕрилле тăваткалласа касмалла.

### Улма-çырла кукăлĕ

**300 грамм çăнăх, 300 грамм сахăр, 150 грамм йогурт, 150 грамм тип çу, 3 çăмарта, 1 чей кашăкĕ апат соди, 1 лимон, консервланă персик кирлĕ.**

Çăмартана йогуртпа, тип çупа пăтратса кăпăклантармалла, çăнăх, сахăр, апат соди, теркăланă лимон хуппи, персик хушмалла. Чустана çатмари пергамент хучĕ çине хумалла. Кукăле 200 градуслă духовкăра 40 минут пĕçермелле.

### Ыхраллă батон

**1 батон, 100 грамм сыр, 100 грамм услам çу, 4 шăл ыхра, петрушка, симĕс сухан кирлĕ.**

Сыра теркăламалла, петрушкăпа симĕс сухана вĕттĕн турамалла. Çимĕçсене çемçелнĕ услам çупа пăтратмалла.

Батона тăрăхла касмалла, анчах вĕçнех çитермелле мар. Унта маларах хатĕрленĕ хутăш тултармалла. Фольгăпа чĕркенĕ батона 20 минутлăха духовкăна лартмалла.

## ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Паха им-çам

Çăкăр çĕпри ӳсен-тăраншăн – паха им-çам. Унра фитогормон нумай. Çĕпре шывĕпе шăварсан тăпрари микроорганизмсем хăвăртрах ӳссе аталанма, йышланма тытăнаççĕ. Азотпа фосфор шайĕ те ӳсет. Паха шыв хатĕрлеме 3 литрлă банкăна шыв, çур стакан сахăр, 100 грамм çĕпре ямалла. Хушăран ăна пăтратмалла. Йӳçсе чăрăнсан им-çам хатĕр. Ăна шывпа хутăштармалла та /1 стакан – 10 литр/ кашни тĕм айне пĕрер литр сапмалла. Çу каçа висĕ хутчен шăвармалла. Кун пек апатлантарнă хыççăн тухăç та ӳсĕ, культура сивĕрен те хăрамĕ.

# Тухăçлă сухан

Сухан тухăçĕпе савăнтартăр тесен ăна лартнă-пăхнă вăхăтра çак сĕнӳсем пулăшĕç.



Лартас умĕн севока 3 сехетлĕхе тăварлă шыва /1 литр шыва 3 апат кашăкĕ тăвар/ ямалла. Ун хыççăн тӳрех 2 сехетлĕхе марганцовка шывне чикмелле. Тăррипе чӳхемелле.

Сухана шăна ан тапăнтăр тесен симĕсленме тытăнсанах ăна малтан тăрă шывпа шăвармалла. Ун хыççăн – нашатырь спирчĕ хушнипе /1 витрене – 2 апат кашăкĕ/, унтан каллех тăррипе сапмалла.

2 эрнерен сухана малтанхи майпах тепре шăвармалла. Хальхинче нашатырь спирчĕ мар, тăварпа /1 литр шыва 1 апат кашăкĕ/ усă курмалла.

Тата 10 кунран марганцовка шывĕ сапмалла.

Çĕре кăпкалатсах тăмалла. Сухан çĕрпе шывне те кăмăллать. 1 витрене 100 грамм çĕпре ямалла, унпа 1 сехетрен усă курма юрать. Кăларсан та сухана хуралтă тавраşĕнче мар, хĕвел питтинче типĕтсен аванрах.

## СЫВЛĂХ

# Усăллă исĕм

Атеросклерозпа чирлесен кунне висĕ хутчен апат умĕн пĕрер стакан исĕм сĕткенĕ ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 6 эрне.

Бронхит асаплантарать-и? Тĕттĕм тĕслĕ исĕм ытларах çимелле. Çырлана вăррипе пĕрле чăмламалла.

Пĕрмаях тула тухайманнипе асаплансан апат умĕн 1 сехет маларах кунне висĕ хутчен 2-шер стакан исĕм сĕткенĕ ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 2 уйăх.

Нерв тытăмĕ хавшасан тата пĕрмай вăйпĕтнипе асаплансан та ытларах çак сĕткенпе сăйланмалла.

Подаграпа чирлекенсен те 1-1,5 уйăх куллен апат умĕн 1 сехет маларах висĕ хутчен исĕм сĕткенĕ ĕçмелле. Малтанах çур стаканран пуçласан каярах висене 2 стакана çитермелле.

**Асăрханăр:** сахăр диабечĕпе, вар-хырăм чирĕсемпе асапланакансен исĕм сĕткенне ĕçме юрамасть.

## ÇИВĔЧ ЫЙТУ

# Вăрлăх туянма пĕлетĕр-и?

**"Лайăх тата пахалăхлă вăрлăх – пысăк ăнăçу," – теççĕ опытлă пахчаçăсем. Вĕсемпе килĕшмесĕр май çук. Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн специалисчĕсем вăрлăх енĕпе ирттернĕ тĕрĕслевсем çакна çирĕплетеççĕ çеç.**

### Кирлĕ документсăр – эппин, пахалăхсăр?

Нумаях пулмасть инспекторсем Шупашкарти суту-илӳ вырăнĕсенче пулнă. Иккĕленӳ çуратакан вăрлăх çине-çинех куç тĕлне пулнă. Ара, сентре çинчи тĕрлĕ вăрлăха Патшалăхăн селекци çитĕнĕвĕсен реестрĕнче шырасан та тупайман. Чылай сутуçăн вăл е ку вăрлăх тĕлĕшпе сорт тата шăтаслăх пахалăхне çирĕплетекен документсем алă айĕнче пулман. Сăмах май, асăннă реестра управлени сайтĕнче самантрах тупма май пур.

### Ыттисен йăнăшĕнчен вĕренме пуçлăпăр-ши?

Кунашкал лару-тăрăва çулсерен сӳтсе явма тивет, анчах тупăшшăн çунакан усламçăсемпе сутуçăсем çакна шута илмеççĕ.

"2014 çулта вăрлăх енĕпе 105 тĕрĕслев ирттертĕмĕр: пурĕ – юридици вăйĕнчи 75 çынна тата 28 предпринимателе. Йĕркене пăснă 124 тĕслĕх тупса палăртнă. Акнă чухне йĕркене пăхăнман 54 тĕслĕхе шута илнĕ.

Тĕрĕс мар упрани те куç тĕлне пулчĕ – 5 тĕслĕх. Документсем тĕрĕс мар çырса пыманни-хатĕрлеменни те часчасах тĕл пулать – 7 тĕслĕх. Патшалăхăн селекци çитĕнĕвĕсен реестрне кĕртмен сортсен вăрлăхне сутни вара часчасах тĕл пулать.

Пĕтĕмпе 146, 72 пин тонна – ял хуçалăх, 25 пин хутаç пахча çимĕç тата чечек культурисен вăрлăхне тĕрĕслерĕмĕр, çавăн пекех тĕм-йывăç – 3050 штук.

Палăртмалла, 298 партирен 115-ĕн сорт тата шăтаслăх пахалăхне çирĕплетекен документсем пулман. **Тĕрĕсленĕ йывăç-тĕмсен пĕрин тĕлĕшпе те кирлĕ документсем кăтартайман.**

Акма мĕнле вăрлăхпа усă курнине те тимлĕхрен вĕçертместпĕр темелле. Пĕтĕмпе 426 парти тĕрĕслерĕмĕр /9929,2 пин тонна/. Хуçалăхсем 54 партин сортне тата шăтаслăхне ятарласа тĕрĕслеттермен. 3 парти /148,40 тонна/ ГОСТ ыйтнине тивĕçтермест. Акса хăварнă 52 партин вара сорт пахалăхĕ паллă пулман.

Тĕштырă тата пахчаçимĕç культурисен вăрлăхне мĕнле упранине тĕрĕсленĕ чухне те асăрхаттарусемсĕр май килмерĕ: 78 партирен 5-шĕ тĕлĕшпе управ йĕркине пăхăнманни куç кĕрет. Реестра кĕртменнисем те тĕл пулчĕç.

Пĕтĕмпе юридици вăйĕнчи – 9, 26 пуçлăха, 12 предпринимателе тата 52 çынна административлă майпа явап тытма тиврĕ, асăрхаттарусем те пулчĕç", – каласа кăтартать вăрлăх тĕрĕслевĕ енĕпе тимлекен Валентина Никитина.

### Вăрлăх хутаççинче – сăтăрçă-çум курăк

Специалистсем асăрхаттараççĕ: документсăр вăрлăхран паха çимĕç пуласси иккĕленӳллĕ кăна мар, унпа пĕрле хăрушă чирсем тата сăтăрçăсем пахчана çăмăллăнах лекме пултараççĕ. Мускавран "килнĕ" пахчаçимĕç вăрлăхĕнче уйрăмах вăйлă сиен кӳрекен çум курăкăн – уй-хир пурçăнĕн – вăррине асăрханă. Вăл ӳсен-тăран тăрăх явăннă май унăн сĕткенĕпе аталанса пурăнать. Унра наркăмăшлă япала – сапонин – висçи пысăк, çавăнпа та выльăхшăн сиенлĕ. Уйрăмах япăх типĕтни вар-хырăма чире ярать.

Кунашкал "кĕтменлĕхсене" сиресси хамăртан килет. Инспекторсем вăрлăха ятарлă лавккасенче туянма сĕнеççĕ. Вăрлăхăн кашни партийĕ валли сертификат пулмалла. Вăл – тавар хăрушсăрлăхĕн тата пахалăхĕн гаранчĕ. Документра культура ятне, унăн сортне, парти номерне тата ытти информацие кăтартмалла. Сертификат çинче çырни хутаç çинчипе пĕр килсен – вăрлăх пахалăхлă. Вăрлăх хутаççисем çинче производитель ятне, адресне тата телефонне; культура, сорт ятне; стандарт паллине /ТУ/, парти номерне; йывăрăшне /грамм/ е шутне; усă курма юрăхлă вăхăтне кăтартмалла. Фитосанитари документчĕсем пурри те тĕрлĕ иккĕленĕве сирет.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА, управлени ĕçченĕ.**



АХ, АНЧАХ...

# Вăхăтлăх киленӳ

Арçынсăр пурăнмасть пĕрле çитĕннĕ кӳршĕ хĕрĕ: пĕри тухса каять те теприне чĕнсе илет. Уншăн кашнинчех çĕнĕ пурнăç пуçланать çапла. Ăна ятлакан, ăса вĕрентекен çук: ашшĕ-амăшĕ аякра, пĕчĕкренех пăхса çитĕнтернĕ асламăшĕ чирлесе çĕре кĕчĕ. Çавăнпах хăйне килĕшнĕ пек пурăнать Алина. Ял-йыш сăмахне тахçанах хăлхине чикме пăрахнă вăл.

...Кӳршĕре ирех пăта çапни илтĕнет. Ĕçчен çынсен ыйхă та килмест пулмалла. Тинтерех килнĕ хула арçынĕ сак ăсталама пуçланă. Малтанхисем Алинăна усă тăвасшăн тăрăшнине питех асăрхаман. Ку ĕç тĕлне пĕлет ахăр. Кил хуçи хĕрарăмĕ ун йĕри-тавра чупкалать анчах. Хĕпĕртенĕ хăй. Унчченхисем вырăн ăшăтма кăна килсе каятчĕç. Кайран тăраниччен апат çиетчĕç те – тухса утатчĕç. Тутлă пĕçерме пĕлет тантăшăм – уншăн ăна ырламалла çеç. Чуста çăрса кукăль тума ӳркенмест вăл. Катлет та, пĕлĕм те шăнтса хурать.

Ку арçынпа Алина пасара кайсан паллашнă. Лешĕ хитре калаçакан хĕрарăмран юлман, пĕрлех ларса килнĕ. Хула çынни пĕтĕм ĕçе пăрахса яла куçни тĕлĕнтерчĕ паллах. Мĕншĕн килтен тухса тарнă хайхискер? Тăванĕсем çухатман-ши ăна? Пĕлсе пĕтер хальхи арçынсене: мĕн шутлаççĕ – çавна тăваççĕ.

Кӳршĕ арçынĕ пирĕн пата та килме пуçларĕ. "Ялта кичем, калаçма çын сахал", – тет. Эпир унăн тунсăхне сирме темĕн те пĕр каласа кăтартатпăр, ăна сĕтел хушшине те лартатпăр. Хăнапа хамăра тӳрккес тытни килĕшӳсĕр. Пирĕнпе пĕрлех телевизор та курать, радио та итлет вăл. Кайран тата çывăхри пĕвене пулла çӳреме пуçларĕ. Чăнах та, сăмах ваклама юратать вара. Ун чухлĕ шӳт ас тăвакана урăх пĕлместĕп. Хăш чухне кулса хырăм хытсах ларать.

Алинăн кăмăлĕ улшăнчĕ. Манпа сăмах чĕнми пулчĕ. Эпĕ ăна кӳрентернине ас тумастăп. Сăлтавне кайран тин пĕлтĕм: хула арçыннине туртса илесрен хăранă вăл. Урама тухсан ман çине сиксе ӳкрĕ: çӳçрен ярса тытрĕ, вăрăм чĕрнипе пит-куçа чĕрмелеме пуçларĕ. Хурах, пулăшăр! Çутă кунрах тапăнаççĕ! Ман сасса илтсе ял-йыш сиксе тухрĕ. Вĕсем чармасан мĕн пулĕччĕ-ши? Çулталăкри вăкăра хӳринчен туртса ӳкерме пултараканскер мана, хытканскерне, хĕнесе пĕтерĕччĕ-ши? Çакăншăн вăрçă пуçламаллаччĕ-и? Эпĕ ăна куç хывман, качча тухма пуçтарăнман. Ахалех сисчĕвленнĕ тантăшăм.

Тепĕр темиçе кунран хăна ялтан тухса кайрĕ. Транспорт чарăнăвĕ еннелле пĕччене утрĕ вăл. Тахăш самантра тăна кĕнĕ хула арçынĕ. Айăпа кĕнĕскер арăмĕнчен, ачисенчен каçару ыйтасшăн та çемйипе пĕрлех пурăнасшăн. Ларса кайрĕ те – каялла таврăнмарĕ.

Лару-тăру çакнашкал çаврăнса тухнăшăн макăрса йăлăхнă кӳршĕ ман патах килчĕ. Ыталаса илчĕ те пуçне ман кăкăр çине хучĕ, чунĕ канмччĕнех ĕсĕклерĕ. Каçартăм ĕнтĕ ăна. Унăн çак таврашра пирĕнтен çывăх çын та çук.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

ЧУНРИ

# Шыракан тупать теççĕ

Çулсем тĕлĕнмелле хăвăрт шăваççĕ. Халь кăна эпĕ те вунсаккăртаччĕ. Сисмерĕм те – кĕçех 45 тултаратăп. Çак тарана çитсе те çемье çавăрайманран хам çула калама та намăс. Халь тин авланса пулĕ-ши, çамрăк хĕрсем ман пекки çине темшĕн куç хӳрипе те пăхасшăн мар. Вĕсене чиперрисемпе пуяннисем кăна илĕртеççĕ. Ман вара ялти йывăç çуртпа тракторсăр пуçне урăх нимĕн те çук. Атте лартнă мунча та кӳршĕсен енне тайăлма пуçларĕ.

Хампа пĕр çултисемпе аслисем кирлĕ мар мана. Ялти намăс-симĕсне çухатнă инке-аппа тахçанах йăлăхтарса çитерчĕ. Упăшкисене Мускава ăсатса янă-яман улаха чĕнекенсемпе калаçма пĕр кăмăл та çук. Хĕрарăмăн пăртак сăпайлăрах пулмалла мар-шим? Ясар куçĕсем суйма памаççĕ, пĕр арçынпа кăна пурăнакан арăм çук та пирĕн ялта. Каçхине ман чӳречерен пырса шаккакан та пайтах. Хапха алăкне уçмасан кӳрененçи пулаççĕ тата. Сирĕн ялта мĕнле пуль те, пирĕн енчисем ытла та вĕри çав. Хăш-пĕр инке хĕрлĕхĕ тахçанччен манăçмасть. Çапах та, çулсем иртнĕçемĕн арçынна çемье кирлĕ. Вăхăтлăх юратусем йăпанмалăх кăна, вĕсемпе пурнăç тума çуккине лайăх ăнланса илтĕм.

Эх, каччă чухне хĕрсене мĕншĕн тиркенĕши? Пĕрин сăмси ытла пысăк пек туйăначчĕ, тепри самăрччĕ, виççĕмĕшĕ кутăнччĕ. Кашнин çинчех мĕнле те пулин çитменлĕх тупаттăм. Хĕрĕсем мар, хам кутăн пулнă мари-ха? Халь пăхатăп та: пĕри тепринчен чипертерех. Эпĕ вунсаккăрта чухне çав пикесем ăçта пулнă-ши?

Хаçата пĕлтерӳ пама ыйтаççĕ паллакансем. Çук, ун урлă паллашса çемье çавăрнине пачах та ăнланмастăп, ку мана кулăшла пек туйăнать. Ĕлĕкрен: «Турă çырни пӳрт умнех килет», – тенĕ. Ваттисем каланине ĕненетĕп.

Пĕтĕмпех вăхăтра иккен. Тырпула та пиçсе çитсен вырса илеççĕ. Çакăн пирки çамрăк чухне темшĕн шухăшламан вара.

Ĕçсе-çапкаланса çӳрекен арçын мар эпĕ. Сăнран та чипер, ахальтен çамрăк чухне хĕрсене тиркенĕ-им? Салтакран килсен курасчĕ сирĕн мана. Епле шухăччĕ, пĕрре кăчăк туртсанах хĕрсем ман ытама лекетчĕç. «Çак çула çитсе те авланайман-тăк – апла пулсан путсĕр, ĕçкĕç», – тесе шухăшлама кирлĕ мар ман пирки. Çулсем пуррине пăхмасăрах хĕр шыратăп-ха, шыракан тупать теççĕ.

**СЕРГЕЙ.**

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Калаçтаракан çыру

Ах, кăмăл мĕнле лайăх ман паян! Интернет урлă тахçанхи савнине тупрăм. Пĕр тăхтамасăр ун патне çыру шăрçаларăм. Ун çинчен тахçанах шухăшлама пăрахнă-ха, пурпĕрех тунсăхлани çинчен çыртăм. Пĕрремĕш хут чуптунине, чечек парнеленине аса илтертĕм, малтанхи сăнӳкерчĕксене ярса патăм.

Унăн сайтне арăмĕ тĕрĕслесе тăнине пĕлмен. Вăл упăшкин страницине усса манăн çырăва вуланă. Хĕрарăм тӳрех хуравларĕ. Пуçларĕ вăрçăнма: "Манăн упăшка кирлĕ-и сана? Пирĕн пурлăха хапсăнатăн-и?" – тет. Эпĕ хама лăпкă тытма тăрăшатăп. Мĕншĕн кӳренмелле манăн? Эпĕ ĕлĕкхи савнин арăмне палламастăп. Вăл та мана курман. Çитменнине, эпĕ аякри хулара тĕпленнĕ. Тăван тăрăха сайра хутра çеç килсе каятăп.

Тахăш самантра кил хуçи ĕçрен таврăнчĕ. Халĕ виççĕн те çыратпăр. Арçын пире, икĕ хĕрарăма, хирĕçтересшĕн мар. Мăшăрне, ачисене юратнине палăртрĕ вăл. Эпĕ те çемье сăнӳкерчĕкне кăтартрăм. Ют арçынпа тĕлпулу шыраманнине иккĕшне аранах ĕнентертĕм.

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**

УЛТАВ

# Чечек çыххи

Ĕçтешĕме те, упăшкана та шанми пултăм юлашки вăхăтра. Манăн çурăм хыçĕнче иккĕшĕ юратулла выляççĕ. Малтан çак шухăш сисчĕвлентеретчĕ çеçха, каярах чăнлăх палăрчĕ.

Ваççапа юратса пĕрлешнĕ эпир. Çирĕм пилĕк çул пĕрле пурăнатпăр ĕнтĕ. Çак тапхăрта шуррине те, хурине те сахал мар тутантăмăр. Çапах яланах алăран алă тытăнса утнă, пĕр-пĕрне сутман. Килте те юратупа килĕшӳ хуçаланнă ĕмĕрех. Икĕ хĕрĕмĕр те çак ăшăпа çепĕçлĕхе туйса ӳсрĕç.

Юлашки вăхăтра вара упăшка сивĕнме тытăннине сисрĕм. Малтанах çакна Ваçça урăххи патне чупнипе çыхăнтармарăм-ха. Тен, ватăлса пырать терĕм. Хĕрарăм чунĕ сисетех çав. Пире улталама йывăр. Çывăрма выртсан ыталарĕ пулин те ачашлăх çухалса пычĕ. Ĕçрен те кая юлса таврăнакан пулчĕ. Кун пекки малтан та пулман мар-ха. Анчах килсенех пырса ыталатчĕ, чуптăватчĕ. Халĕ вара юлса таврăнсан тӳрех çăвăнма васкать – хăйĕнчен ют шăршă кĕнине сисесрен сыхланать пулмалла.

Пĕр-икĕ çул каялла ĕç вырăнне улăштарма тиврĕ. Малтанхи коллектив та лайăхчĕ пирĕн, хальхи те унран юлмасть. Çав тери туслă пурăнатпăр. Уявсенче, паллă кунсенче час-часах пĕрле чей ĕçетпĕр. Пысăк уявсене пухăннă чухне мăшăрăмăрсене те чĕнетпĕр. Пирĕн ĕçре Личук пур. Качча кайман ватă хĕр вăл. Кăмăлĕпе те аван пек – темшĕн пурнăçĕ ăнман тулкккăш. Пĕррехинче пĕр уявра манăн Ваççапа ташларĕ хайхи. Хĕрĕнкĕленнĕскерсем епле кăна хиркеленмерĕç пулĕ. Анчах пачах та кĕвĕçмерĕм. Ара, ташланишĕн мĕн пултăр? Çакăн хыççăн ĕçтешĕм хушăран упăшкам пирки ыйткаласа пĕлни те сисчĕвлентермерĕ.

Анчах юлашки вăхăтра иккĕшне шанми пултăм. Личук та чиперленме тытăнчĕ, хушăран киле кайиччен те ытти чухнехинчен ытларах капăрланчĕ. Кун пек чухне Ваçça та хăвăрт таврăнмарĕ. Çаксем



пĕр-пĕринпе çыхăннине малтанах шухăшламарăм та. Личукăн çуралнă кунĕнче пулнă ĕç-пуç хыççăн çеç тавçăртăм çакна.

Кăнтăрла çитеспе Личука пысăк чечек çыххи кӳрсе пачĕç. «Вăрттăн юлташран» алă пуснă унта. Эпир, хĕрсем, Личукăн савни пуррине чухлатпăр-ха, анчах вăл ун пирки пĕрре те каламасть. Чечекпе кам саламланине те пĕр сăмах та ыйтса илеймерĕмĕр. «Такам», – терĕ вăл сăпайлăн.

Уявран мăшăрăм кĕтсе илчĕ. Киле çитсен ывăннине пăхмасăр япала çăвас терĕм. Пушшех те, халĕ алăпа йăваламалла мар вĕт – машина çаврăнттарать. Ваççан кĕпине ывăтиччен кĕсйисене тĕрĕслес йăла пур манăн. Тепĕр чухне вăл унтан укçа, хут таврашне кăларма манать. Акă паян та чечек лавккинче çыхă туянса эпĕ ĕçлекен адреспа çитерме пичет çаптарнăскерне тупрăм унта. Анчах мана кун пек парне тивĕçмен-çке. «Личук!» çиçĕм пек вĕçрĕ пуçра.

Тарăхнăскер тӳрех çывăрмалли пӳлĕме вирхĕнсе кĕтĕм. Анчах Ваçça тĕлĕрме ĕлкĕрнĕ. Вăратасшăнччĕ – хĕрĕмсем чей ĕçме чĕнчĕç. Вĕсен умĕнче тавлашма-хирĕçме хăнăхман эпир, çавăнпах хама ним пулман пек тытрăм. Ачамăрсен ĕçĕсемпе кăсăклантăм. Çĕрĕпе шухăшласа выртнă хыççăн Ваççана та кĕвĕçсе харкашса кăтартам мар терĕм. Лăпкăн çеç калаçма шухăш тытрăм.

Чăн та, ирпе, чечек çыххи пирки сăмах пуçартăм.

– Каçар, Наденька. Чăн та, ватлăх енне сулăнсан ютти пусăма çавăрчĕ. Хам йăнăш тунине те тавçăрнă эпĕ. Ĕнерхи чечек çыххи те пирĕн хутшăнура пăнчă лартаканни çеç пулчĕ, – ĕнентерчĕ Ваçça. Ĕмĕрĕпе пурнăç пĕрле тунă çынна епле шанмăн?

Çав кунран Личук, чăн та, салху çӳрекен пулчĕ. Кăштахран пачах урăх ĕçе вырнаçрĕ.

**НАДЕЖДА.**

# Сарă конверт

Иван ТЕНЮШЕВ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 12-15-мĕш номерсенче/.

Тăван ялтах çуралнă сăмахсем чĕрене пырса тивеççĕ. Русаккасси хĕрĕсене мухтани хăв çуралса ÿснĕ кĕтесе аса илтерет. Юрă чăнах та калама çук пысăк пуянлăх, чун уççи, чĕре апачĕ. Ăслă сăмахсемпе ырă кĕвĕ лăпкă кăмăл-туйăм çуратаççĕ, пĕр вăхăтлăха вăрçă нушинетертне манма пулăшаççĕ, шанчăк кÿреççĕ. Кунта пурте Марьен: сарă тĕсĕ кайма пуçланă гитара та, юрри те. Çапла-çапла, сăввине те, кĕввине те хĕр хăех хывнă.

**Сан чуну кама савать?**

Пирĕн ялăн хĕрĕсем
Шурă акăш пек хитре.
Хĕвел çути хĕмленсе
Ялкăшать кашни питре.
Пуçра ялан пĕр шухăш
Кунĕн-çĕрĕн явăнать:
Сан чуну кама савать?
Ман чунăм санах савать.
Уйра çерçи пулмасан
Кантăр вăрри кам çийĕ?
Савни çумра пулмасан
Кăмăлăма кам çĕклĕ?
Сăран алса çакăллă,
Савнă тусăм шанчăклă.
Пĕвĕм ман ун умĕнче,
Шухăшăм ман ун çинчен.
Хура çăмат кам сутать,
Кăваккине кам илет?
Кала халĕ, чунăм савни,
Эп çук чухне кам килет?
Тунсăхласан – хĕр курма
Тухсам аслă урама.
Ман сассăма эсĕ илт,
Сан сассуна эп илтем.

Юррăн хушу йĕркисем уйрăмах килĕшрĕç Мируна:

Савасси чун-чĕререн
Пытăрахчĕ ĕмĕре!
Ан иккĕлен: эпĕ сан!
Эсĕ те пулсамччĕ ман!

Ку йĕркесене йĕкĕт унччeнех илтнĕччĕ вĕт. Ăçта? Хăçан? Ара, виçĕм çул Анаткасра, пике рыцаре тĕлпулăва вăхăтра çитейменшĕн пăскăртнă чухне.

Тăван Анаткас юрри мĕн хак? Тÿрех калар – хаксăр. Тĕрĕссипе, унăн хакне нимĕнле мулпа та виçеймĕн. Тăван чăваш юрри ылтăн кĕмĕлрен те хаклăрах, чуна çывăх, чĕрене хĕпĕртÿллĕрех тапма пулăшать. Марьен кĕмĕл сасси тап-таса çăлкуç шăнкăртатнине аса илтерчĕ, хайĕн çепĕçлĕхĕпе тыткăнларĕ.

– Сире халиччен Хадарова Мария ятпа çеç пĕлеттĕмĕр. Юрă авторĕн псевдоним пури? – ыйтать йĕкĕт. Унашкалли çуккине, ун пирки шухăш хĕр пуçне пачах пырса кĕменнине пĕлсен уçăмлă сĕнÿ парать:

– Малашне сана Анаткас Марйи тетпĕр. Сан юрруна çак псевдонимпа пичетлĕпĕр!

– Кăлăхах пуçа ан çавăрха: умри тĕллев пичетленесси мар, блокадăран хăтăласси... – çирĕппĕн евитлерĕ хĕр хайĕн шухăшне.

– Эппин, туй пирки те калаçас мар-и? Юрĕ, калаçмăпăр, анчах пуçăнтан пĕр шухăш ан тухтăр: вăрçă чарăннă-чарăнман Пăшатансен кинĕ пулатăн!

Кăвак куç, хура çÿç, çăмăл кĕлетке... Çавăн пек Мирун куç хывнă хĕр.

Пĕр те пĕр шутласан, ытти хĕрсем пекех. Анчах мĕншĕн урăххи мар, Марье килĕшетха Анаткас йĕкĕтне? Мĕн пирки уншăн çак хĕр тÿпери çут çăлтăр, умри сÿнми маяк пулса тăчĕ? Çук çав, Мирун пĕлекен ытти хĕрсенчен Марье чиперлĕхĕпе çеç мар, ăс-хакăлĕпе те палăрмаллах уйрăлса тăрать. Вăл çепĕç те ырă кăмăллă, йывăрлăхра кирек кама та пулăшма яланах хатĕр. Юрлама питĕ юратать, юррисемпе йĕкĕте савăнтармаллипех савăнтарать. Хĕрĕн янкăс сасси чуна шанчăк кÿрет, кăмăла çĕклет. Юррисем вара пурте тенĕ пекех юрату çинчен, тантăшĕсем çинчен.

– Марье каласамччĕ, юрра юратасси ăçтан пуçланнă-ха сан? – ыйтрĕ унран Мирун.

– Юрă еннелле туртăнасси аннерен пырать пулĕ тетĕп. Атте хуткупăс калама ăста. Вăл купăс калама ларсан анне юрламасăр тÿсейместчĕ, хушăран урипе те тăпăртăпăр туса илетчĕ. Халĕ пурнăç тыткăчĕ – атте – фронтра, киле сайра кĕрсе тухать.

Марье сăвăсем çырнине, хăех юрăсем кĕвĕленине Анаткасра пĕлменпе пĕрех. Нимĕнпе те уйрăлса тăмасть вăл ыттисенчен, анчах кăвак чечеке аса илтерекен куçĕ ытла та ăшшăн пăхать, кăмăллă çутă сапать. Вăрçă инкекĕ-синкекĕ, сивĕ-сивлек выçă кунсем хĕр пĕвĕ-кĕлеткипе сăнне палăрмаллах улăштарнă, анчах çар тумĕ ăна питĕ килĕшет, ăмсанмалла хÿхĕмлĕх кÿрет, хĕр чунхавалĕ ăна çаплах сăвă-юрă енне туртать. Ку хĕр – пултаруллă сăвăç та, чаплă юрăç та. Сцена ăсти пулмалласкер. Ун хыççăнах иккĕленÿ çуралать: тахçанхи ĕмĕтне пурнăçлатăр-и, аслă пĕлÿллĕ тухтăр пултăр-и? Тепĕр тесен, музыкăпа медицина пĕрпĕрне кансĕрлемеççĕ, çын чунне пуянлатаççĕ, сывлăха упраççĕ.

– Юрра тепĕр хут пуçлама хал çитерĕн-ши? Атя пĕрле юрлатпăр! – сĕнчĕ Мирун хĕре.

Марье питне çутăран та çутă хĕм тухрĕ, куçĕнче пысăк саванăç палăрчĕ. Хайĕн юрри йĕкĕте çакăн пек килĕшессе кĕтменччĕ вăл. «Сан чуну кама савать?» юрă кĕçех тепĕр хут янăрама пуçларĕ.

Марьен ытарайми янкăс сассине унăн аллинчи гитарăн чăнкăл-чăнкăл хĕлĕхĕсем пуянлатрĕç, хĕпĕртеттерекен асамлă вăй пачĕç. Юрланăçемĕн хĕр урăхлараххăн, çутăраххăн, кăмăллăраххăн курăнма пуçларĕ. Юрă уншăн – чун савăнăçĕ, çутă тĕнчене уçса кĕмелли алăк. «Эсĕ телейлĕ пулсан эпĕ те телейлĕ пулăп!» – терĕç пике куçĕсем йĕкĕте.

– Хула тăрăх çÿресе чăваш йĕрĕсене кăтартас килет. Вăй-халăм пулсан иксĕмĕр пĕрле çуллахи сада çитсе курăттăмăрах. Унта пирĕн ентешĕмĕр Николай Егоров ĕмĕрлĕх йĕр хăварнă! Ку сад картине лăпах унăн проекчĕпе тунă...

– Эсĕ, Марьеçĕм, историк пекех нумай пĕлетĕн иккен... Корректура йăнăшĕ çеç асăрхарăм: Николай мар, Петр Егоров!

– Чăнах та, шăллу сан чăнах та Миккуль! Николай Яковлевич Пожеданов! Вăл офицера тухни çинчен хыпар пирĕн пата та çитнĕ. Халь ăçта-ши вăл? Нина Слесарева кĕтсе илеет-ши ăна вăрçăран?

Мирун çамки çинче пĕр пĕрĕм туртăнса илчĕ. Куçĕ тĕтреленсе кайрĕ. Нинăн тăпри çăмăл пултăр! Шкул ачине пĕверен çăлса кăларнă чухне хăй путса вилет. Шăнăр туртнипе. Миккуль мана çыру госпитальтен янăччĕ. Вăл та сылтăм хул шăмминчен аманнă... Халĕ фронтра пулма кирлĕ... Ну, юрĕ, çуллахи садра хăçан пулнă эсĕ? Егоров карти сыхланнă-ши?

– Ку карта чиперех ларма кирлĕ. Эрешлĕ хапхине маскировка çиттипе хупăрланăччĕ. Чăваш архитекторĕн проекчĕсемпе хулара мĕн-мĕн тунине шутласа та пĕтереймĕн.

Пуплесе ларнă май вăхăт иртни сисĕнмерĕ – тул çутăлма пуçларĕ.

– Çакă çутă тĕнчере эпĕ ниме те мар, тăван чĕлхемĕре юрататăп.

Вăл чи янăравли те пуянни. «Тул çутăлать!» Вырăсла куçар-ха çакна.

Светает? Пĕрремĕш сăмахĕ куçарăнмасăр юлать... Тул çутăласпа – на рассвете... Чăвашăн пур, вырăсăн ун пек сăмах çук!

Ытла та лайăх килĕштернĕ чунпа пĕр-пĕрне ăнланса калаçса ларма!

Марье сисмесле Мирун çумнелле йăпшăннă пек пулчĕ те, икĕ çамрăкăн тутисем йăпăртах пĕрлешрĕç. Тул çутăлнă чухне чуптуни уйрăмах палăрăмлă, нумайлăха асра юлать. Чун уççисен пĕрлехи калаçăвĕн вĕçĕ çук иккен.

– Таçта вуланăччĕ: чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхисен шутĕнче. Кала-ха, Мирун. Тĕрĕсех-и çакă?

– Ун пирки манран мар, Василий Васильевич Радловран ыйтмалла. «Опыт словаря тюркских наречий» тĕпчев авторĕ вăл. Ун шучĕпе чăваш чĕлхи малтанласа тĕрĕк чĕлхисен шутне кĕмен, каярахпа кăна тĕрĕкленнĕ.

– Малти, кайри... Пур унашкал ăнлавсем... – кулаçи турĕ Марье. – Кайри тĕрĕк пултăр, малти мĕн?

– Ман шутпа, пирĕн Анаткас вырăнĕнче авал пăлхарсем кун çутипе савăнса пурăннă... тĕрĕксен пусмăрне лекиччен. Эп астăвасса Шăнкăртам хĕррине çÿллĕ çыранта капмар чул выртатчĕ, ун çине Танкăра – пăлхарсен туррине – асăнса тем çырнăччĕ... Асанне вăл чула вырăнтан хускатма чаратчĕ. Ку çырма хĕррине пăлхарсен Пÿлерĕн пĕр ертÿçи пуç хунине асăнатчĕ. Эппин, чăваш чĕлхи пăлхарсен чĕлхипе тăван... Малти – пăлхар чĕлхи.

Ирхи кÿлĕм Марье ĕнтĕркеме пуçларĕ, йăрăс кĕлеткипе йĕкĕт çумне именчĕклĕн тĕршĕнчĕ. Çамрăк тутасем тытăнкăсăр пĕрлешрĕç. Савакан чунсен ырлăхĕпе канлĕхĕ тинех тупăнчĕ.

Хĕрпе йĕкĕт хушшинчи шăкăл-шăкăл калаçăвăн çав кунах татăлмалла пулса тухрĕ. Мирунăн госпитале таврăнмалла. Халĕ вăл сывалаканнисен командинче. Паян-ыран пахăн комиссие кĕмелле. Инвалидсен шутне кĕртсен Мирон Пожеданов мичмана Анаткаса таврăнасси кĕтет.

– Эсĕ ман пата паха кучченеçсемпе килтĕн. Манран та пĕчĕк парне илсемччĕ! Унсăрăн йĕкĕт хĕре манса та кайĕ! Ан çухатсамччĕ!

Марье комодран пурçăн тутăр кăларчĕ, ăна йĕкĕте реверанс туса пачĕ – пĕшкĕнÿллĕн пуç тайса, юратса та савса. Темиçе тĕслĕ капăр çиппе тĕрленĕ йăлтăруллă тутăр общежитин тăвăр пÿлĕмне хĕвел пайăркине илсе кĕнĕнех туйăнчĕ.

Мирун малтан хĕр парнине чуптурĕ, унтан йĕкĕтпе хĕр тутисем пĕрлешрĕç.

Йĕкĕт тăван ялăн тăпăлтăпăл хĕрне аса илсенех унăн куçĕ умне шкулта вĕреннĕ чухнех панă сарă конверт тухса выртать. Мĕн пулнă-ши çав конвертра? Мĕншĕн çухатма тивнĕ-ха хĕр парнине тавçăрусăр тусĕн? Халĕ çак ыйту пырса кĕчĕ Мирун пуçне.

– Астăватăн-и, Марье, эсĕ Анаткасра мана сарă конверт парнеленĕччĕ. Ан ятла: эпĕ ăна çухатрăм. Утмăлтурат чечексĕр пуçне унăн пĕлтерĕшне те пĕлсе юлаймарăм. Мĕн пулнă-ши çав конвертра?

Хĕр кăмăлсăрланса пĕр вăхăта хытса кайнă пекех пулчĕ. Юратнă хĕр парнине çухатма юрать-и вара! Турă сыхлатăр таса юрату сĕврĕлесрен.

Кăштахран, чунĕ лăплансан, хĕр йĕкĕт çумне тепĕр хут çывăхах пырса тăчĕ.

– Ан кулян, Мирунăм! Сан аллунта ун чухнехи парнен дубликачĕ!

Хĕр мĕн каланине пушкараймасăр йĕкĕт ун çине тĕлĕнерех пăхрĕ.

– Ун чухнехи парнен иккĕмĕш экземплярĕ эппин... Ан çухат! Ан çухат!

Йĕкĕт савăнăçлăн ахăл-ахăл кулса ячĕ, хĕре каллех тутлăн чуптума пуçларĕ.

Туссем паян уйрăласси пĕр-пĕрне тăруках татса парайми ыйтусем панипе вĕçленчĕ.

– Хăçан туй тума шанчăк пур? Нивушлĕ çĕнтерÿ кунĕ çитиччченех кĕтмелле? – кăсăкланчĕ Мирун хĕре куçран пăхса.

– Хăв пĕлетĕн: эпĕ санпа пĕрлешме хатĕр. Тĕрĕссипе, вырăн çинче пĕрлешсе те куртăмăр ĕнтĕ... – именсе куçне мăчлаттарчĕ хĕр. – Анчах ăçта пурăнăпăр? Анаткасра Хаяркинсем Хадаровсене каллех хĕстерме пуçласан мĕн тăвăпăр?

Сиксе тухнă ыйтусем тăруках татса парайман çав.

Общежитин çурри таран снаряд ватнă çуртĕнчен тухса эвакогоспитале таврăннă чухне Марье сăнĕ йĕкĕт куçĕ умĕнчех мĕкĕлтетрĕ. Чун вăркатмăш хĕр сăнарĕ ирхи çутă çăлтăрла çутатать. Чăнах та хитре тăван ял хĕрĕсем: сăнĕсем тулнă уйăх евĕр, чĕлхисем чĕкеçĕнни пек, сассисем шăпчăкăнни евĕр, акăшла ярăнса утаççĕ, кăмăлĕсем çу пек. Анчах тÿпере Алтăр çăлтăртан çутăрах çăлтăр урăх çуках. Анаткасра вара Марьерен хÿхĕмрех пике шырасан та тупăнмасть. Вăл хайланă çĕнĕ юрă сăмахĕсем те, чуна килĕшнĕ кĕвви те йĕкĕт пуçĕнчен тухмарĕç. Унпа татах та курнăçма, тарăн шухăшлă юррине итлеме турă пÿрнĕ-ши е çук-ши?



## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

Николай АГАКОВ

Çут хĕвел пекех анне,
Тупма çук ун пеккине.
Шăнкăрав пекех кулли,
Ун илемĕ куç тулли.

Ачине вăл ачашлать,
Чĕререн-çке ыр сунать.
Хĕвелтен вăл ăшăрах,
Уйăхран та çутăрах.

Анне маншăн – чи хакли,
Чи ырри, чи шанчăкли.
Чи-чи ăшă кăмălli,
Пурнăçра чи чăтăмли.

Савăнатăп аннепе,
Юрататăп чĕрепе.
Çакă çутă тĕнчере
Савнă çыннăм ман пĕрре.

Канаш районĕ.



ПĔЧЧЕН АШШĔ

# Ун çумĕнче пилĕк шăпăрлан хÿтлĕх тупнă

## Пушкăртстанра пурăнакан арçын ачисене пĕчченех ÿстерет

**Микрохумлă кăмака – чаплă пурнăç палли**

Çемье эрнере пĕртен пĕр кун – шăматкун – пĕрле пуçтарăнать. Арçын хуралçăра вăй хурать: виçĕ кун урлă пĕр талăклăх ĕçе каять. Тăххăрти Валерăпа улттăри Сережа Бирск хулинчи интернатра вĕренеççĕ. Пиллĕкри Ксюша тата виççĕри Варя ача садне çÿреççĕ. Иккĕри Гордей вара – "кил хуралçи".

Белоусов-асли ĕçрен таврăнасса чÿречерен пилĕк мăшăр куç чăтайми кĕтет. Журналистсене те урама тухса кил хуçи кĕтсе илет. Ачасем – чÿрече умĕнчех. Ашшĕн кашни хускалăвне сăнаççĕ. Тунсăхланă курăнать. Çемье пурăнакан çурт пысăк мар – пĕр пÿлĕм кăна. Ăна шкапсемпе пÿлкеленĕ. Хăнасем илсе пынă кучченеçе ăшăтмашкăн Белоусовсен нимĕн





те çук: микрохумлă кăмака вĕсемшĕн хальлĕхе – чаплă пурнăç палли кăна. Чейник лартаççĕ. Куркасене те сивĕ шывпах çума лекет – ăшши çук.

– Вĕри апат валли сарделька пĕçер, – асли майĕпе хушать Сергей. – Сахăр тÿрех хур. Тăхта, ăçта йăтса кайрăн куркасене?! Сивĕтмелле малтан!

Унтан арçын ача хăнасене тĕпелтен тухма ыйтать – кухньăрах çăвăнаççĕ-мĕн вĕсен.

**Арăмне çăлайман**

Пулас мăшăрĕпе Сергей 23 çулта паллашнă. Юрату çамрăк чĕресене тыххăмрах вут хыптарнă. Икĕ ывăл çуралнă. Йăлтах йĕркеллĕ пек, анчах та çамрăк хĕрарăм симĕс çĕлен тыткăнне çакланнă.

– Эпĕ командировкăсене тухса кайттăм, вăл вара çав вăхăтра эрех виçине пĕлмесĕр ĕçнĕ. Ачасене çитересси пирки те маннă çав самантсенче. Сережа икĕ çулта куçсăр тăрса юлнă... Амăшĕ ăна пляжа илсе кайнă. Хăй каллех вăхăта хаваслă ирттернĕ. Никам та асăрхаман ачана çав вăхăтра темĕн çыртнă. Тухтăрсем те пулăшаймарĕç. Куçа куракан тума çук ĕнтĕ...

Сергей тÿрех парăнман-ха, кĕрешнĕ, арăмне эрех-сăра лачакинчен туртса кăларма тăрăшнă. Кăлăхах. Нимĕн те пулăшман. Медицина та, ачисем те – вĕсем вара çав вăхăталла пиллĕкĕн пулнă ĕнтĕ.

– Тула каяс килет... – калаçăва чи кĕçĕнни Гордей пырса тататъ. Ашшĕ ывăлне çăмăллăн çĕклесе илет те кухньăна илсе каять. Апла унта вĕсен – çимелли тата çăвăнмалли пÿлĕм те кăна мар...

Пилĕк куртка, пилĕк калпак... Урама усăлма тухмашкăн пуçтарăнасси – хăй уйрăм калаçу. Йăлтах пилĕк мăшăр шыраса тупмалла – пилĕк мăшăр пушмак, пилĕк мăшăр нуски. Йĕм, кофта, куртка, калпак – кравать çинче пĕчĕк сăрт ÿссе ларать.

– Ку манăн куртка мар, манăн кĕрен тĕслĕ, – кăмăлсăрлăхне палăртать Варя.

Пулăшма Сергей чупса çитет. Вăл ачисен çи-пуçне çăмăллăн уйăрать: пĕр-пĕр фокусник тейĕн. Анчах та кăткăслăх кунпа кăна вĕçленмест-ха.

– Манăн тÿмеленмест, – йĕрмĕшет Ксюша.

– Манăн вара сăмса юхать, – Варя та юлмасть унран.

Ачасене урама илсе тухма хатĕрленнĕ журналист çамки пăчăр-пăчăр тарланă. Пусĕнче, ахăртнех, пĕртен пĕр шухăш – хăçан кас пулать-ши, шăпăрлансем хăçан çывăрма выртаççĕши? Юрать хăть аслăраххисем хăйсемех тăхăнаççĕ.

*Сергей Белоусовăн аслă ывăлĕ те 9 çулта кăнаха. Кĕçĕнни вара нумаях пулмасть иккĕ тултарнă. "Амăшĕ ĕçке ярăннă, ашшĕ, чăтăмĕ пĕтнипе, ачисене интерната панă..." Ĕç-пуç çакăн пек аталаннă пулсан, тен, никам та тĕлĕнмĕччĕ, анчах та арçын йывăр лава шăлне çыртса, мекĕрленсе малалла туртать. Ĕçе çÿреме те, яшка пĕçерме те, ача-пăча япалине çума та ĕлкĕрет. Анчах та вăл арçын вĕт-ха... Кун пек те пулать-и вара?*

Урамра хаваслă шăв-шав пуçланать. Валерка сăрт тăрринчен шуса анать. Сережа кĕрт ăшне пуç хĕрлĕ сикнĕ. Журналист хăранипе куçне хупма та хăрать – пурин хыççăн йĕрлесе çитерме те май çук. Кĕçех Валерка алсишне манса хăварни палăрать. Ксюшăн çăматтине юр çакланнă. Сережа вара çырма хĕррине çитнĕ – çыранран сикме хатĕрленет...

– Окоп чавма атя, – туртать çанăран журналиста Валерка.

Лешĕ хуравлас вырăнне майĕпен юр çине тĕшĕрĕлсе анать.

– Мĕн, ывăнтăр-и? – кулать Сергей.

**Юсав ĕçĕсем валли укçа çук**

Каллех чейник вĕреме кĕрет. Каллех пĕр купа чей курки çумалла. Унтан кашнинех техĕмлĕ шĕвек тултармалла. Ĕçнĕ хыççăн йăлт каялла пуçтармалла. Кунĕпех çапла – урапари пакша пек. Кас еннелле шутласа пăхнă хыççăн журналист кунĕпе çирĕм пилĕк курка çуни палăрать...

Сергей ачасене хальлĕхе хуçалăх ĕçĕсене явăçтармастьха. Валеркăна кăна, асли пек, пылесос шанса панă. Арçын ача сĕтел-пукана куçарать те вĕсен хыçне тăкăннă штукатурка юлашкисене ĕмтерсе илет. Хĕрарăм хыççăн тата 10 пин тенкĕлĕх

кредит юлнă, çавăнпа хальлĕхе çурта юсаса çĕнетмешкĕн укçа çитмест кил хуçин.

Белоусовсен çемье бюджечĕ пысăк мар – арçыннăн шалăвĕ 20 пин тенкĕ тата 10 пин тенкĕ пособи. Ултă çыннăн çакăнпа – 30 пин тенкĕпе – тăранса, тумланса пурăнмалла. 4,5 пин тенкĕ няньăна тÿлеме тăкакланать. Тата тăваттă – электричествăшăн /çурта хутса ăшăтма тăватă калориферпа усă кураççĕ/. Юлнине вара çемье çисех пĕтерет.

**"Яшка пĕçернипе кама тĕлĕнтерĕн!"**

Талăклăха ĕçе кайнă чух кил хуçалăха тата ачасене Сергейăн аппăшĕ хăйĕн ывăлĕпе пĕрле асăрхать. Гордейкăна пăхаççĕ, вĕт-шакăра ача садĕнчен илсе таврăнаççĕ. Пĕр талăкра çак ушкăн 5 литр кĕрекен кастрюле



йăлт пушатать. Яшкине вара Сергей ĕçе кайиччен пĕçерсе хăварать.

– Яшка пĕçернипе кама тĕлĕнтерĕн? – йăл кулать пĕччен ашшĕ. – Мĕн-мĕн ямаллине пĕлетĕп. Нумай чухне импровизацилетĕп. Какай пĕçерме, ман шухăшпа, кирек мĕнле арçын та пĕлет. Ку тем мар-ха, вăт манна кĕрпинчен те эпĕ пăтă пĕр кумалякăсăр пĕçерме вĕренсе çитрĕм! Кăçхи апата, сăмах май, манты хатĕрлесшĕнха. /Вăт хула ачаш арçыннисем валли Интернетра Джентльменсен блогне кăна тытса пымалла Сережăн/.

Апат-çимĕç, паллă ĕнтĕ, лавĕпе тухса каять.

– Ытларах чухне пĕчĕк партипе туянма тăрăшатăп, – каласа кăтартать Сережа. – Макарон, хура тул – пилĕкшер килограмм, сахăр – 10, чăх какайне – курупкипех. Виçĕ литр кĕрекен банкăри сĕт икĕ куна çитет. Çăкăр-булка тавраш лавĕпех илетĕп. Япала çума та кăткăс мар халĕ – машинăна перетĕп кăна.

**"Тата иккĕ те пăсмасть"**

Кăçхи апат хыççăн шавлă ушкăн çывăрма хатĕрленет. Аслисем тăваттăн дивана урлă выртаççĕ – унсăрăн вырнаçма май çук. Валеркăн, паллах, ури çакăнса тăрать-ха та ĕнтĕ, анчах арçын ача ăна хутлатма шантарать.

Килте шăплансан кăна журналист... хырăм выçнине туйса илет. Ача-пăчапа аппаланса апат çиме те маннă вĕт. Эх, çакăн пысăкăш йышпа арçынна çапах та пачах та çăмăл мар вĕт.

– Малтанлăха кăна йывăр пек туйăнать. Кайран хăнăхатăн. Манăн, сăмахран, тата иккĕ тупас килет, – тĕлĕнтерет ĕмĕчĕпе Сергей. – Эпĕ халĕ çамрăк вĕт-ха: 33-ре кăна. Ачасене те амăшĕ кирлĕ... – хальхинче унăн сассинче тунсăх палăрать.

**Ял канашĕнче**

– 2011 çулта эпир Белоусовсене çурт тумашкăн ятарлă программăпа килĕшÿллĕн 300 пин тенкĕлĕх процентсăр заем сĕннĕччĕ – килĕшмерĕ, – паллаштараççĕ лару-тăрупа вырăнти ял канашĕнче. – Çапла, саккунпа килĕшÿллĕн пирĕн вĕсене пурăнмалли кĕтеспе тивĕçтермелле. Анчах та пушă хваттер çук муниципалитетăн – мĕн пуррине йăлт приватизациленĕ. Халĕ вĕсем хваттер черетĕнче тăраççĕ.

**СПЕЦИАЛИСТ ПĔТĔМЛЕТĔВĔ**

*Наталья Абысова, психолог:*

**– Арçын тени çапах та ытларах тулаш тĕнчешĕн яваплă. Килçуртшăн, ачасемшĕн, хуçалăхшăн – хĕрарăм. Арçынна ку лару-тăрура çăмăл марри тÿрех паллă, вăл мĕн чухлĕ чăтса çитерессине çеç никам та калаймĕ. Унăн тĕнчи ача-пăча тавра кăна çаврăнмасть. Хĕрарăм çемьере кирлех. Вăл ача-пăчана ачашлăх, ăшăлăх парнелет, тĕнче çине те урăх куçпа пăхать. Арçын, кирек мĕнле тăрăшсан та, ачасемшĕн амăшĕ вырăнне пулма пултараймасть. Чăн та, тепĕр чухне тĕлĕнтермĕш сиксе тухать пурнăçра. Çав тĕлĕнтермĕшсенчен пĕри – Сергей Белоусов. Вăл – чăн-чăн паттăр!**



## И-ХИ-ХИК

Паркри сак çинче хĕрпе каччă лараççĕ. Пикен питĕ савнине чуптутарас килет, анчах та калама вăтанать. Хайхи пурпĕр мĕн тумаллине шухăшласа тупать.

– Манăн пит ыратать, – тет хайхи.

Юрать каччи тавçăрулла та, пикене питçăмартинчен чăпăрт чуптуса илет.

– Халĕ ыратмасть-и?

– Çук.

Ларсан-ларсан хĕр татах:

– Манăн мăй ыратать, – тет.

Каччи ăна мăйĕнчен чуптуса илет.

– Халĕ ыратмасть-и?

– Çук, ырат-масть.

Çывăх-рах мучи ларать.

– Итле-ха, çамрăк çыннăм, эсир пилĕк ыратнине те ирттерме пултаратăр-и? – тет.

* * *

Кашни хĕрĕн ĕмĕчĕ идеал шайĕнчи каччă тупассипе çыхăннă теççĕ. Çапла пулмасăр! Эпир нумай çиме, çав хушăрах ытлашши килограмсенчен хăпма ĕмĕтленетпĕр.

* * *

– Хăв çинчен каласа кăтарт-ха.

– Шăмă, какай, 5 литр юн, çиççе тăракан кус...

* * *

Ĕçме пăрахсан юлташăмсем эпĕ вĕсене юратнине тата хисеплenине çурçĕр иртни икĕ сехетре пĕлмесĕрех юлаççĕ вĕт.

* * *

– Уголовник! – тарăхса кăшкăрать арăмĕ упăшки çине.

– Криминалист, – тӳрлетет мăшăрне ШĔМ тытăмĕнче ĕçлекен арçын.

* * *

Пасар. Аллине хут татки тытнă арçын ретсем тăрăх çӳрет.

– Эй, эсир сухан туянмасăрах иртсе кайрăр! – кăшкăрать хыçалтан пĕр сутуçă.

– Анчах та мана сухан илме никам та хушман – курăр: хут çине çырман, – кăтартать арçын.

– Ара, таврăнăр каялла, халех çырса паратăп, – çухалса каймасть сутуçă.

* * *

– Эпĕ аслăрах – санран маларах тухнă, – тет йĕкĕреш хăраххи теприне.

– Апла мар çав, – хирĕçлет лешĕ. – Эсĕ тухмалли çĕре çывăхарах пулнă – çавă çеç. Мана вара чĕре çывăхнерех тытса тăнă.

* * *

– Манса кай ман çинчен!

– Тăхта-ха, санăн ипотека кредичĕ вара – ăна ман ятпа илнĕччĕ вĕт...

* * *

Мĕн чухлĕ сахалрах пĕлетĕн – сесси çавăн чухлĕ хаклăрах.

* * *

Йĕркелеме пĕлсен нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕ хăв сисмесĕрех пушăн 8-мĕшне куçать.

* * *

– Сикнĕшĕн мĕн чухлĕ тӳлемелле?

– 10000 тенкĕ.

– Хăрушă. Парашют усăлмасассăн?

– Тем мар, эпир сире укçăра тавăрса парăпăр.

* * *

Интеллигентсен çемйи. Хĕрарăм виççĕмĕш сехет ĕнтĕ пĕр чарăнми виолончель калать.

– Лăплан ĕнтĕ, чунăм, – тет юлашкинчен упăшки. – Туянăпăр эпир сан валли Италире кăларнă атă.

* * *

Упăшкапа вăрçăнтăмăр. Тарăхни-качки яшкана виагра ятăм. Эх, упăшка мĕнлерех чупрĕ ман хыççăн, упалене-упалене каçару ыйтрĕ.

* * *

– Пĕр пытармасăр кала-ха, эпĕ сăрланман чухне хăрамастăн-и эсĕ манран?

– Тĕрĕссипе, эсĕ сăрланнă пулсан та кăштах хăратăп эпĕ санран...

* * *

– Вăт, тĕнче! – кăшкăрать арçын.

– Мĕн пулчĕ, чунăм?

– Нимĕн те пулман-ха, кусlăха тасатрăм.

* * *

– Ăшаланă çăмарта чăмăрла пĕçернинчен мĕнпе уйрăлса тăрать?

– Чăмăрла пĕçерни хыççăн çатма çумалла мар.

* * *

– Кинемей, калăр-ха, тархасшăн, больницăна мĕнле лекме пулать?

– Мана тепĕр хут “кинемей” тесе чĕнмелле кăна.

* * *

Хĕрарăма ăнланса çитерме çук – хирĕçӳ вĕçленнĕ тĕле вăл унăн сăлтавне ас тумасть те ĕнтĕ...

* * *

“Оливье” салат нумайăшне сăнран паллать.

* * *

Отпуска директор кăна кайнă, анчах пĕтĕм коллектив... каннă.


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**298.ПОРОСЯТ** – дорого, круглый год. Самовывоз. Т. 89063825331.

### ĔÇ РАБОТА

**126.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.

**197.Бурение скважин на воду.** Опыт, качество. Т. 89656876888.

**246.Бурение скважин** на воду до 50 м. **Чистка** старых **скважин.** Т. 8-906-381-60-37.

**260.Бурение скважин** /до 90 м./. Недорого. Т. 89278625531.

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ пропаренные,** вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. Т. 89603073151.

**3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, **керамзит.** Доставка по низким ценам. Т. 8-960-307-31-51.

**4.**Немецкие **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.КРОВАТИ от 2000 р., ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Т.: 89278441501, 674642.

**7.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Д-ка. Т. 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 89033583021, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**37.**Ворота, калитки, **заборы,** навесы, **ТЕПЛИЦЫ.** Кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 89022881447, 387574, metalservis21.ru

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Низкие цены. Т. 48-16-54.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку,** столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 8-937-952-22-11.

**138.ОКНА, ТЕПЛИЦЫ, обшивка** домов, **двери** /сталь/. Гарантия 15 л. Скидки 40 %. Т. 89196624097.

**143.ТЕПЛИЦЫ** от производителя – от 5950 руб. Т. 89276682828.

**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

**174.МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота** и др. изделия от производителя Т. 89276682828.

**180.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**232.Заменитель цельного молока** для телят и поросят. Т. 89876681717.

**296.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89613429059.

**299.УДОБРЕНИЕ** – аммиачную селитру /мочевину/. Т 8 /8352/ 37-20-56.

**Хаçатăн çитес номерĕ май уйăхĕн 8-мĕшĕнче тухать.**



**« ХЫПАР »**

Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ**

**Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ**

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

**Çырăнмалли индекс: 11515**

**Редактор – М.М.ИЛЬИНА**

**Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА**

**Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службив 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.**



**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07

**Электрон почти:** hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 29.04.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8305. Заказ 1620.